Светлана АСАМАТ

«НАРСПИ» поэма вăрттăнлăхĕ

Данте Алигьерин
«Божественная Комедия»
тата К.В. Ивановăн
«Нарспи» поэмисене танлаштарса
тишкерни

Шупашкар
2020

УДК
ББК
А

Светлана Асамат

А «Нарспи» поэма вăрттăнлăхĕ: Данте Алигьерин «Божественная комедия» тата К.В. Ивановăн «Нарспи» поэмисене танлаштарса тишкерни / С.В. Смирнова. — Чебоксары, 2020. — 95 с.

Светлана Асамат К.В. Ивановăн «Нарспи» поэмине Итали ҫыравҫи Данте Алигьери хайланă «Божественная Комедия» поэмăпа юнашар хурса тишкерет. Литературăна юратакансене кăсăклантаракан самантсем ҫак тишкерӳре чылай.

УДК
ББК

© Светлана Асамат, 2020

«НАРСПИ»
ПОЭМА ВĂРТТĂНЛĂХĔ

1

К. Ивановăн «Нарспи» поэмипе эпĕ тахçантанпах кăсăкланатăп. Чăваш патшалăх университетне вĕренсе пĕтернĕ май çырнă диплом ĕçĕнче те ун тавралла тапăртатнă. 2005 çулхи çĕртме уйăхĕнче «Хыпар» хаçатăн виçĕ номерĕнче «Нарспи вăрттăнлăхĕ» ăнкарăвăм пичетленчĕ. Ун хыççăн мана питлесе ятлакансем те, иккĕленсе калаçакансем те пулчĕç. Çавăнпа та «Нарспи» çинчен пуçарнă сăмахăма каласах пĕтерме кирлине туятăп. Мана кун çинчен К. Иванов хăех пĕлтерчĕ.

2007 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче (хăй вилнĕ кун, 92 çул иртсен) тĕлĕкĕме килсе К. Иванов манран кăмăс ыйтрĕ. Питĕ тĕлĕнтĕм: чирĕнчен çăлăнма кăмăс пулăшасса шаннипе-ши терĕм. Манăн тĕпчевĕм, эпĕ «Нарспи» поэмăн чăн тупсăмне уçса палăртма тапаçланни уншăн кăмăс вырăннех пулчĕ пулĕ терĕм. Ыт ахальтен килмен ĕнтĕ вăл ман тĕлĕке. Тен, эпĕ чăнах та «Нарспи» тавралла купаланса тулнă ыйтусене ăна тивĕçтерекен хурав паратăп?..

П.В. Михеева çырнă «Пичче çинчен аса илнисем» асилӳрен: «Пичче ун чух выртмаллипех выртмастчĕ-ха, ура çинчех уткаласа çӳретчĕ. Шухăшĕ-кăмăлĕ хăйĕн пĕртте салхуллă марччĕ, чиртен сываласса ĕненсех пурăнатчĕ. ...Хĕллехи каникулсем пуçланчĕç. Эпир — аслă аппа, Чĕмпĕртен вĕренсе тухнăскер, Квинтилиан,

Чĕмпĕрте вĕренекенскер, тата эпĕ — пурте киле пухăнтăмăр. Пирĕн Кĕҫтенттин пĕтĕмпех пĕтсе, хухса кайнă, вырăн ҫинче выртмаллипех выртать. Ҫапах эпир килнипе питĕ хавасланса ӳкрĕ: тăтăшах вырăн ҫинчен тăра-тăра ларать, ун ҫинчен, кун ҫинчен ыйтса пĕлет, калаҫать, кулкалать. Вилесси ҫинчен шухăш та ҫук. Унăн пĕтĕм ĕмĕчĕ — ҫуркунне иртсенех пĕр-пĕр пушкăрт ялне кайса кăмăспа сывалма тытăнасси.

— Акă, ҫуркунне ҫиттĕр-ха. Виҫ-тăватă уйăх хушши кăмăс ĕҫсе пурăнăп та, кĕркунне, сывалса ҫитсен, каллех хам ĕҫĕмсене тума тытăнăп, — текелесе илет вăл калаҫура ҫине-ҫинех. Анчах кăмăса кайма пайтах укҫа кирлĕ пулнă. Пичче хăй атте-анне пулăшасса ĕмĕтленнĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен хăй унта ĕҫленĕ чухнехи ĕҫ укҫине ярса парасса шанса тăнă пулмалла». Малалла вуланинчен: «... Хăш чухне вăл тĕкĕр витĕр нумайччен хăй ҫине пăхса выртатчĕ. «Шалт шурса кайрăм... Ҫапах та вăл-ку нимĕнех те мар-ха, чирлĕ чух ҫын яланах сăнран ӳкет. Акă ҫăва тухам-ха, ун чух кăмăса кайса часах сывалса ҫитĕп, ӳтĕм те хушăнĕ, сăнăм та кĕрĕ», — тетчĕ салхуллăн сывласа. Кăмăса кайса сываласси ҫинчен пичче мĕн юлашки кунĕ таталичченех ĕмĕтленсе пурăнчĕ».

Чи пĕрремĕш хут чăвашсем йышлăн пурăнакан Пушкăрт республикинче, Пелепей тăрăхĕнче эпĕ 1977 ҫулта пулса куртăм. Чăваш тата пушкăрт ҫыравҫисем пĕр ушкăна пухăнса «Литература эрни» йĕркеленĕ, ял-хула ĕҫченĕсемпе хаваслă тĕлпулусем иртрĕҫ. Мана ҫав ĕҫе ытларах юрăҫ шайĕпе яваплана, эпĕ хамăн сăвăсене те вуланă, паллах, нумайрах баян каласа юрланă. Хам 25 ҫул тултарнине Силпире курăк ҫине сарнă ҫивитти

çинчи апат-çимĕç кĕрекинче уявланăччĕ, йӳçĕ турăх е уйран тути калакан пушкăрт кăмăсне тутаннăччĕ. Кăмăса ӳпке чирĕнчен сыватакан лаша сĕтĕнчен йӳçĕтнĕ пушкăрт эмелĕ теççĕ. Вăтăр виçĕ çул тултарнинe те унта уявланăччĕ. 1985 çулхи июнь уйăхĕнче Пушкăрта Н.И. Ивановпа, Г.Г. Чаржовпа, В.П. Тимаковпа тата Р.В. Сарпипе пĕрле кайса килнĕччĕ. Пушкăрт тăрăхĕнче пилĕк кун пурăнса çакăн пек маршрутпа çӳрерĕмĕр: Ĕпхӳ — Пелепей: «Дружба» колхоз, Шаровка ялĕнчи сабантуй, Слакпуç — Красный яр — Чубукаран — «Авангард» колхозри Кивĕ Семенкке ялĕ — Пелепейри «Автонормаль» завод, педучилище, Техника çурчĕ. Пире Пелепей хулин парти комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ Г.И. Николаев чăваш илсе çӳрерĕ. Пушкăрт пылне тултарнă йывăç упа, йывăçран касса кăларнă пакша, чăваш тĕрриллĕ капăр шкатулка, чей курки — çуралнă кун ячĕпе хама парнеленĕ хаклă парнесем — килте тата Чăваш наци музейĕн фондĕнче упранаççĕ.

Эпĕ К. Иванов çуралса ӳснĕ Слакпуçĕнче нумай хут пулнă. Нарспипе Сетнерĕн тăван ялĕнчи Силпи çăлкуçĕнчен ывçи-ывçипе шыв сыпа-сыпа ĕсĕклесех макăрнăччĕ. Ĕлĕкхи пек шарласа мар, шăппăн кăна юхса выртать вăл халĕ. Ял хĕррипе, вăрман çумĕпе юхса выртакан Силпи шывĕ те çинçелнĕ, ăшăхнă, кĕперĕ ишĕлсе ӳксе çĕрсе кайнă. Шурă чулсем тăрăх шапăртатакан шыв сиккисен сасси те имшерленнĕ. Çăлкуç патне çитме питĕ сивĕ, тăп-тăрă шыв урлă çара уран, кĕпе аркине çĕклесе каçнăччĕ, пĕр вăтăр утăм е ытларах улăх тăрăх утнăччĕ. Силпи çыранĕпе упаленсе тенĕ пекех, вăрăм курăкран тыта-тыта, аран-аран анса хăпарнăччĕ.

Слакпуç тăрăхĕ Чăвашран пыракан çыравçăсен шухăш-кăмăлне çутатать, хавхалану парать. Слакпуççем хăнасене юрла-юрла çăкăр-тăварпа, кăмăспа кĕтсе илеççĕ. Кĕрекене ларсан К.В. Ивановпа Я.Г. Ухсая асăнмасăр эпир пĕр сĕтел те пуçламан.

Пĕрремĕш хут кайсанах мана слакпуççен пĕр юрри питĕ килĕшнĕччĕ. Сăмахĕсене çырса илтĕм. Киле таврăнсан кĕввине ниепле те асилеймерĕм, баян калансă май «Ай ишет-çке пăлан...» тесе çĕнĕ кĕвĕпе юрласа ятăм. Ăçта кайма тӳр килнĕ — Пушкăрт чăвашĕсен саламне пур çĕре те çак юрăпа илсе çитернĕ. «Пушкăрт чăвашĕсен юрри» ятпа эпĕ ăна Ленинградри грампластинкăсем кăларакан «Мелодия» заводра 1991 çулта тухнă «Светлана Асамат юрлать» пластинкăна кĕртнĕччĕ.

Силпи ялĕнчи пӳрт вырăнĕсенче, сакай шăтăкĕсем тавра вĕлтрен чашкăрать. Тахçан-тахçан ял кĕрленĕ, халĕ вара пач пушă вырăнта утнă май чуна тĕрлĕ шухăш вĕлтрен пек чĕпĕтсе шуйлантарса илет. Шел пулин те, Хушăлкана, Нарспи шар курнă яла, кайса кураймарăмăр.

Чăваш çамрăкĕсен «Сăвар» пĕрлешĕвĕн ертӳçи О.М. Цыпленков йĕркеленĕ чунçӳреве хутшăннă 33 чăваш Пушкăртри Силпи ялĕн вырăнĕнче «Силпи» тесе касса çырнă пысăк Юпа лартрăмăр. Цыпленков ыйтнипе (килес ăрусем валли) Юпа никĕсне эпĕ çырнă 10 куплетран тăракан «Халал» сăвва кĕленче савăта вырнаçтарса хурса хăвартăмăр. Сăввине эпĕ пĕрисем Юпа касса эрешленĕ, теприсем ун валли шăтăк чавнă вăхăтра курăк çине ларса хăвăртах çырса хатĕрлерĕм. Сăвă айне пурте алă пусрĕç. Халал пуçламăшĕ:

Аслă Силпи ялĕнче
Асăм Юпи лартатпăр,
Аслă чăваш халăхне
Пуçăмăра таятпăр.

Халал вĕçĕ: Чăваш чĕлхи, сăмахĕ —
Чун-чĕре ытарлăхĕ,
Шăнăрланнă ăраскал
Пултăр яланах кал-кал.
Çĕр-Анне пуянлăхĕ —
Пурăн, чăваш халăхĕ.

Чунçӳревçĕсен тепĕр ушкăнĕ Силпи çăлкуçне тасатса пура лартрĕ. Çак ĕçсене тунă вăхăтра «Нарспи» поэмăна малтан пуçласа вĕçне çитиччен пĕрин хыççăн тепри пурте илтмелле хытă саспа вуласа тухнă. Кайран Юпа тавра вăйă ирттернĕ. Çакă пархатарлă ĕç 2009 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче пулса иртнĕ.

2010 çулта, К.В. Иванов çуралнăранпа 120 çул çитнĕ май, йĕкĕреш йĕркен çырса «Алфавит» кăлартăм. Кĕнекем «А» сас паллипе çапла пуçланать:

Ашшĕ-амăш куçĕнче —
Ачи-пăчи пĕр тĕнче.

«Я» сас паллипе çапла вĕçленет:

Ят вăл — явап, манас мар,
Ята ярса пурнас мар.

Слакпуç йăмрисем — Кĕçтенттина мĕн ачаран пуçласа юлашки çула ăсатиччен курнисем — шухăша кайнă ватăсем пек, турачĕсемпе çупăрлана-çупăрлана, пĕр-пĕрин çумне тĕршĕне-тĕршĕне кăшăлтатса лараççĕ. Ман вĕсене ытамлас килнĕччĕ. Те шиклентĕм, те иментĕм — тĕкĕнеймерĕм. Слакпуç йăмрисене Чăваш АССР тава ти-

вĕçлĕ художникĕ П.В. Сизов «Нарспи» поэмăна илемлетнĕ чух чăн пурнăçри пек ӳкерсе кăтартнă. П.В. Сизов Слакпуçĕнче пулнă, мĕн кирлине шыранă, тупнă, çавăнпа та унăн иллюстрацийĕсем Слакпуçпе Силпи тавралăхĕ пурнăçра мĕнле пулнă, шăп та çапла ӳкерĕнсе ĕмĕр-ĕмĕре юлнă.

Слакпуç тăрăхĕнче янăракан юрăсем те çав тери хăйне евĕрлĕ евĕк. Чăваш халăхĕн пĕрремĕш «Шывармань» оперипе пĕрремĕш «Сарпике» балетне çырнă Ф.С. Васильев композитор хор валли илемлетнĕ ултă юрăран «Слакпуç юррисем» ярăм калăпланă. Çав ярăм тăван халăхăн кĕвĕ-юрăпа пуян пултарулăх арчинче — хаклисенчен хакли, пахисенчен пахи. Слакпуç тăрăхĕнчи юрăсем уйрăм тĕпчеве тивĕç, вĕсен кĕввипе сăвви аваллăха туртса кĕрсе каяççĕ, тухатаççĕ. Уйрăмах хор ярăмĕнчи «Шĕшкĕ тăрăх ай шыв юхать» юрă кĕввипе сăвви шухăша яраççĕ. Çав юрă чăваш халăхĕ хăйне христиан тĕнне йышăнтарнă вăхăта çеç мар, Иоанн Крестителĕн Елисавеца ятлă амăшне те асăнать. Кашни куплета «Три-лю-ли, Елисавеца» тесе вĕçлет. Ку — асамлă, асаплă ахăр аваллăх асра упранни...

«Слакпуç юррисем» хор ярăмĕшĕн, хор, солист тата симфони оркестрĕ валли çырнă «Фронтри ӳкерчĕксем» хайлавшăн Ф.С. Васильева 1975 çулта К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх премине парса чысланă.

Турă К. Иванова ытла та кĕске ĕмĕр панă. Кĕске ĕмĕрне вăл «Нарспи» çырса хăварнипе вăрăмлатнă. «Хыпар» хаçатра пичетленсе тухнине анлăлатса пухутланă ĕçĕме кĕнекере пичетлесе кăларас тетĕп. Мĕншĕн тесен «Нарспи» авторне çапла кирлĕ пулĕ. Манăн ăнкарăвăм уншăн, тен, — ка-

нăççăр чунне лăплантарма пултаракан, вăл манран тĕлĕке килсе ыйтнă кăмăс.

— 2 —

К. Ивановăн «Нарспи» поэминчи тĕп сăнар тавра темĕн тĕрлĕ сăмах та çӳрет. Хăшĕсем Нарспие çав тери хурласа, питлесе вăрçни чуна касать. Юратнă Сетнерĕпе вăрмана тарнăшăн аскăн, юхха хĕрарăм терĕç. Хĕне-хĕне чунне илекен юратман упăшкине тĕп тунăшăн çын вĕлерекен усал арăм терĕç. Çапли çаплах ĕнтĕ, анчах та... чипер хĕрĕн шăпи мĕнле сăлтавсене пула синкерленсе кайнин янкăр курăмлă сăлтавĕсене асăрхаманни, шута илменни чуна ыраттарать. Мĕншĕн тесен К. Иванов Нарспин кĕске пурнăçĕнчи кашни самантне уççăн çутатса парать, усал ĕçĕсене мĕне пула туса хунине питĕ лайăх ăнлантарса кăтартать.

Вунçиччĕри йĕкĕт, çулĕпе çамрăкскер, ăсĕпе тĕпсĕр тарăн, вышкайсăр çӳллĕ шухăшлă Сăмах ăсти, пысăк пĕлӳллĕ тĕпчевçĕ пулнă. Çамрăк философ пурăннă чухнех «Нарспи» шăпишĕн нумай куляннă. «Нарспие» ун чухнех вăл çырса ăнлантарнă пек мар, синкерлĕ вĕçлĕ халап шайне антарса лартса е çавă вăхăтри революцилле пафос шайĕпе кăна çавăрттарса хаклани ăна кӳрентернĕ.

«Нарспи» пичетленсе тухнă хыççăн К. Иванов тепĕр çичĕ çул пурăннă. Çав вăхăтра çĕнĕрен çырнисене пичете паман, никама та кăтартман, сунтăхра упранă. Поэмăна хăш-пĕр çĕрте касса кĕскетни, уйрăм вырăнсене улăштарма тивни, авторшăн çав тери хаклă пĕлтерĕшлĕ тĕп шухăша шĕветни унăн кăмăлне хуçнă. Çавăн пирки калани унăн пĕлĕшĕ-юлташĕсен асаилĕвĕсенче сахал мар.

Çамрăк çыравçă хăйне пусахланине чăтнă, хирĕçлеме пултарайман. Е.Ф. Шувалова асилĕвĕнче К.В. Иванов йăмăкĕ Мария Васильевна «Нарспи» пирки каланине çырса хăварни пур: «Пичче алçырăвĕсенче улăштарнă вырăн питĕ нумайччĕ. Тăррине те, урăх тĕлте те тӳрлете-тӳрлете çырса пĕтернĕччĕ. Хăшне-пĕрне: "Кусем кирлĕ мар ĕнтĕ", — тесе çурса та пăрахатчĕ».

Б. Иринин вырăсла куçарнă «Нарспи» кĕнеке хыççăмахĕнчен — М.Я. Сироткинăн «Классик чувашской литературы» статйинчен: «Надежды на изменение условий жизни к лучшему поэт, однако, не терял. На вопрос: почему он не пишет? — вспоминает один из друзей К. Иванова И.Т. Трофимов, он неизменно отвечал: «Придет время!»

И.Т. Трофимовăн «К.В. Ивановпа пĕрле ĕçлени» асилĕвĕнчен: «Иван Яковлевич К.В. Иванова чĕнсе илчĕ, çĕнĕ букваре иллюстрацилес ĕçе пĕтĕмпех ун аллине шанса пачĕ. Константин Васильевич букваре пуянрах иллюстрацилесшĕнччĕ, çав шухăшпа вăл букварьти хрестомати пайĕ валли те паха ӳкерчĕксем турĕ. Каллиграфилле çырнисене те вăл хăех хатĕрлерĕ. Ӳкерчĕксене кирлĕ таран туса çитерсен эпир вĕсене Иван Яковлевич аллине патăмăр.

...Кунсăр пуçне вăл букварь валли ятарласах «Çумăр» тата «Урапа» ятлă юрăсен сăввине юсарĕ. «Ласточка» «Времена года», «Репка» сăвăсене чăвашла куçарчĕ. ...Çав çул вăл, букварьпе çыхăннă ĕçсемсĕр пуçне, литература произведенийĕсем урăх çырман». Çакă вăл К. Иванов яваплă, тĕплĕ, тарăн шухăшлакан, пурнăç çине ăспа пăхакан, тытăннă ĕçе тĕплĕ тума юратакан çын пулнине çирĕплетет.

Пултарулăх арчинче упраннă «Нарспи» ори-

гиналне, кайран-малтан çырнисене К. Иванова лайăх пĕлнĕ çынах, тен, кам та пулин хушнипе Граждан вăрçи вăхăтĕнче Слакпуçне пырса сăптăрса тухса кайнă. Кунта та вăрттăнлăх пур. Çав этем е Чĕмпĕре, е Хусана, е урăх çĕре çитсе К. Иванов куç пек упранă ĕçсене хăш шăтăкăн хăш кĕтесне хĕстерсе хунă-ши? Пуçа «Кама кирлĕ пулнă е кама кансĕрленĕ-ши вĕсем?» текен шухăш сăха-сăха ыраттарать. Алçырусен пĕр пайĕ Ĕпхӳри педтехникум преподавателĕсен аллине лекнĕ, тепĕр пайĕ — Шупашкара. Сыхланса юлнă пысăк ĕçĕсем сĕре сахал.

Д.В. Григорьевăн «Ту çинче» асилĕвĕнчи çак йĕркесене палăртмасăр хăвараймастăп: «Хам эпĕ техникумра вĕреннĕ чухне Константин Васильевич алçырăвĕсемпе питĕ интересленеттĕм. Çавăнпа вĕсен килне те кĕре-кĕре тухнă. Пĕр çулхине эпĕ ун алçырăвĕсем кĕлетре выртнине курнă. Хăшне-пĕрне шăшисем кăшласа пĕтернĕччĕ. Ун чухне эп унăн йывăçран тунă машинкине илсе тухрăм. Никама пама пĕлмесĕр, ăна темиçе çул хам патăмра тытса тăтăм, кайран Пелепейри техникума патăм». Д.В. Григорьев интересленнине пула К. Иванов хăй аллипе ăсталанă пичет машинкине халĕ Шупашкарти К.В. Иванов ячĕллĕ Литература музейĕнче курма пулать.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче сутăн илнĕ пĕр сăрăллă ӳкерчĕк те пулман теççĕ унпа пĕр вăхăтра вĕреннисем. Стенасем çинче паллă писательсен, поэтсен К. Иванов ӳкернĕ портречĕсем, вăлах Леонардо да Винчин шедеврĕсене оригиналтан уйăрса илмелле мар ăсталанă ӳкерчĕксем çакăнса тăнă теççĕ. Вĕсем те çĕтнĕ, сыхласа хăварас текен çын тупăнман. Кĕçтенттин ĕçĕсем ăçта та пул-

сан сарăхса выртаççех пулĕ тесе ĕненес килет те... Халь тин, çуралнăранпа 130 çул иртсен, тупăнасса шанма çук.

М.В. Иванова-Максимова асилĕвĕнчен: «Çырнă япаласем нумайччĕ пиччен, пĕр чылаях пысăк арчаччĕ. Арчин тăршшĕ пĕр виçĕ шит ытла, урлăшĕпе çӳллĕшĕ икĕ шите яхăнччĕ. ...Пьесăсем нумайччĕ. Анчах нумайăшне çырса пĕтерейменччĕ. ...Пĕр тетрадĕнче чӳк кĕллисене çырса илни пурччĕ. Вĕсене вăл Кайрăклари Макçăм старикрен çырса илнĕччĕ пулас.

1906 çулта поэт хăй сăвăласа çырнă тата вырăсларан сăвăласа куçарнă алçырусен тетрачĕсем тата ӳкерчĕксен альбомĕ тăван килĕнчи пушар вăхăтĕнче çунса кайнă. Тетрадьре Гетен «Рейнике-Лис» поэмин куçарăвĕ те пулнă».

3

К. Иванов Нарспие питĕ хитре сăн-питлĕ, янкăр уçă кăмăллă, килти пур ĕçе те типтерлĕн тума алли-ури çăмăл пулнине илемлĕн çырса кăтартать:

Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă чечек пек.
Икĕ куçĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрçа пек.
... Хирти сарă чечеке
Ăшă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек лайăх хитре хĕре
Мĕнле каччă юратмĕ?
...Хăйĕн ашшĕ килĕнче
Нарспи канлĕ çывăрать:
Ырă тĕлĕксем курса
Тĕлĕкре те савăнать.

...Аван иртрӗ пурӑнӑҫ
Хӗрӗн ҫулӗ ҫитиччен,
Ашшӗ килне хӑтана
Ҫичӗ ютран киличчен.

Ҫичӗ ют килет те, Нарспин кулленхи пурнӑҫӗнчи савӑнӑҫӗ те, «тӗлӗкре савӑннисем» те пӑчланса лараҫҫӗ. Мӗншӗн тесен:

Ҫак ырӑ ҫын Михетер,
Хӑйӗн хӗрне юратса,
Аслӑ ҫӑварни хыҫҫӑнах
Хучӗ ӑна ҫураҫса.
Пулас туя ял-йышсем
Тӳсеймесӗр кӗтеҫҫӗ:
— Икӗ пуян пӗрлешсен,
Шеп те пулӗ туй! — теҫҫӗ.

Нарспи пур енӗпе те хӳхӗм хӗр: сӑн-пичӗпе те, ӳт-пӗвӗпе те, чун-чӗрипе те. Унӑн хӑй пек хӳхӗм каччӑпа пӗрлешсе хӳхӗм ача-пӑча ҫуратса, телей курса пурӑнас килет. Каччи тупӑннӑ, чечек ҫеҫки ҫурӑлнӑ. Савнине качча тухма ирӗк паманран ҫав ирӗке вӑл хӑйне хӑй парать. Юратнӑ, юратакан Сетнер арӑмӗ пулсан кӑна вӑл хӑйне чӑн-чӑн ҫыннӑн туйма пултарать. Ҫынлӑхне, тасалӑхне таптама хатӗр туй умӗн хӗр ӗмрипе уйрӑлса савнӑ каччӑ мӑшӑрӗ пулма ӗмӗтленни Нарспие савнӑ Сетнерӗпе вӑрман чӑтлӑхне тарса пытанасси патне илсе ҫитерет. Аскӑнас туйӑм ӑшалантарнипе мар, Турӑ панӑ чунӗ ыйтнипе. Хӗр-упраҫӑн тасалӑхне ватӑ, тискер Тӑхтамана мар, юратнӑ ҫынна парнелес килнипе. Чӑн-чӑн юрату сывлӑшӗпе сывласа, ачашшӑн ыталанса чуп туса, хӗрӳллӗн савӑшӑнса телей курас килнипе. Юратман ҫынпа ҫак телее ӗмӗрне те кураяс ҫук. Пиҫсе ҫитнӗ ҫереме ҫиҫӗм тӗренлӗ сухапуҫ ваттӑр, ылтӑн е кӗмӗл вӑр-

лăх актăр. Хĕр тухйине хывса хĕрарăм хушпуне тăхăнтараканĕ чун савнă йĕкĕт пултăр. Çапла пулса тухать те.

Ахальтен мар ĕнтĕ Нарспи ашшĕпе амăшне хăйне качча пама тепĕр çул тăхтама тархасласах йăлăннă.

...Ӳссе çитрĕм, аттене:
«Пĕр çул кĕт-ха», — терĕм те,
Атте вăрçса пĕтерчĕ,
Анне çӳçрен сĕтĕрчĕ.
Мĕншĕн манăн кăмăла,
Çак юлашки кăмăла,
Тумарăн-ши, аттеçĕм?
Халь пулмăттăм каплалла.
Мĕншĕн çапла ху хĕрне
Парса ятăн кашкăра?
Саншăн çав пур ырăлăх
Мĕнпурĕ те укçара...

Пуян ашшĕпе амăшĕ хăйне юратнипе, хĕрхеннипе чухăн Сетнере качча парасса ĕненсех каймасть пулин те, пулса иртнĕ сăлтав ăна телейлĕ пулма пулăшасса шанать. Пурнăçĕ пачах хирĕçле çаврăнса кĕске вăхăтрах, çав çулах, пурне те лӳчĕркесе тăкать. Чи айăплисем — чуншăн мар, мулшăн çунакан Михетерпе карчăкки, пĕртенпĕр хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ. Тăхтаман вара хăйне парăнман арăмне саламатпа ислетнĕшĕн кăна мар, качча илсе кайма пĕр çул тăхтаманшăн Çут тĕнче умĕнче, Юрату умĕнче айăпа кĕрет. Пысăк хырăмлă е ачаллă Нарспи кирлĕ пулмĕччĕ ăна тепĕр çултан. Туй тумаваскатман пулсан, тăхтанă пулсан — вăл сывă юлатчĕ, пурăнатчĕ. Вăл вара тăхтаман, чипер хĕре арăм тăвас тенĕ. Çавăнпа та ун ячĕ те — Тăхтаман.

Автор «Икĕ туй» сыпăкра хĕр туйĕпе арçын туйĕ епле чаплă кĕрлесе иртсе кайни çинчен каласа кăтартнипе çеç çырлахмасть. «Тарни» сыпăкăн вĕçĕнче — Нарспипе Сетнер вăрман хӳттинче, юман айĕнче иккĕн пĕрле ирттернĕ вăрттăн туй («акă туй та çакă туй»). Нарспипе Тăхтаманăн вара «пысăк туй та пăсăк туй» пулса иртнине палăртать. Ку — К. Ивановăн тепĕр вăрттăнлăхĕ.

Икĕ савни тарнине
Хуплаймарĕ сĕм вăрман,
Сарă хĕре Нарспие
Илчĕ-илчех Тăхтаман.
Тăрса юлчĕ кăлăхах
Сетнер çав тер чун савни —
Турă çырни, ахăрах,
Çапла-тăр çав самани.

Поэт çирĕплетнĕ тăрăх, Сетнер Нарспишĕн — Турă çырни, вĕсене таса туйăм, çутçанталăк пĕрлештерет. Тăхтаман Нарспишĕн — тĕпленнĕ килĕшӳсĕр йăла-йĕркен йăнăшĕ, мул серепи ĕрлешĕвĕн синкерĕ.

— 4 —

«Нарспи» поэмăн вăрттăнлăхĕсене уçас тесе ăна Итали çыравçин Данте Алигьерин «Божественная Комедия» поэмипе танлаштарса пăхас терĕм. Дантене хăйĕн хайлавĕнчи Тамăкпа Тасалу вырăнĕсем тăрăх Рим поэчĕ Вергилий кăтартса çӳрет, Çăтмах илемĕсене — Дантен юратнă хĕрарăмĕ пулнă Беатриче. «Нарспи» поэмăри Силпире, Хушăлкара пулса иртекен синкерлĕ пулăмсене К. Иванов хăй кăтартса çӳрет. Унта пулса ир-

текен ĕçсене хăй куçĕпе курса хĕрӳллĕ, çивĕч туйăмпа каласа парать.

К. Иванов Дантене куçарман, анчах та унта çырса кăтартнă хăш-пĕр йĕркесемпе усă курса хăйĕн поэминчи сăнарсене хăйне кирлĕ пек маçтăррăн ӳкерсе вырнаçтарнăн туйăнать. «Нарспие» çырма хавхалантаракан литература произведенийĕ Дантен «Божественная Комедия» поэми пулнă теме сăлтав пур.

Тепĕр япала çинче те чарăнса тăмалла. Ку — икĕ поэт пултарулăхĕнчи чи хаклă, пархатарлă, тăван халăх сăмахлăхĕн пуласлăхĕпе, аталанăвĕпе çыхăннă, историре ĕмĕрлĕхе никĕсленсе юлнă пуçару. Вĕсем иккĕшĕ те — наци литературин чĕлхине йĕркелесе çирĕплетсе тĕп вырăна лартнă литератор-новаторсем. 14-мĕш ĕмĕрччен, Данте умĕнхи çырулăхра Итали чĕлхин тĕрлĕ диалекчĕсемпе, латынь, француз, провансаль чĕлхисемпе усă курнă. Патшалăх шайĕнче йышăнса усă курмалли итали чĕлхи пулман. Данте çак ĕçе теорипе лингвистика, практика тĕлĕшĕнчен никĕсленĕшĕн ăна «Тăван чĕлхен чи ăста тимĕрçи» ят панă. Асăннă камит — итали чĕлхипе калăпланă пĕрремĕш монументлă хайлав. Данте евĕрлĕ тĕллев тытнă К. Ивановăн «Нарспи» поэми те — чăн чăваш литературинчи ансат чĕлхепе-çырулăхпа тĕвĕленĕ-кĕвĕленĕ пĕрремĕш пысăк ĕç.

Поэмăна К. Иванов пуш уйăхĕнчен, çуркуннерен пуçарса янă. Хĕвел ăшши тĕнчене вăратать, илем кӳрет. Силпи — пуян, чаплă ял. Унта пурăнакан халăх ĕç-пуçĕ те чиперех йĕркеленсе пырать. Чăваш — ĕçсе-супса пылчăк çинче улпут пек сарăлса выртма та, вăхăчĕ çитсен тар тăкса ĕçлеме те, вăйăра, туйра, ĕçкĕ-çикĕре, уявра çĕр çĕмĕрсе юрласа-ташласа савăнма та — пул-

таруллӑ халӑх. Мӗн авалтан тӗпленнӗ ӗҫ-пуҫне, йӑла-йӗркине чиперех пурнӑҫласа пырса аванах пурӑнать.

Ҫӑтмах пекех туйӑнать
Силпи чӑваш ялӗнче,
Вӑхӑт иртни сисӗнмест
Савӑнӑҫлӑ кунсенче.
Кайӑк юрри, ҫын сасси
Ян-ян ярать таврана,
Ҫуркуннехи хавас юрӑ
Килсе кӗрет хӑлхана.
Урам тӑрӑх ҫыннисем
Улпут пекех утаҫҫӗ.
Пӳрт хыҫӗнче шавласа
Ачи-пӑчисем выляҫҫӗ.
Нар пек хитре хӗрӗсем
Акӑшсем пек утаҫҫӗ,
Чӑнкӑр-чӑнкӑр тенкисем
Йӑлтӑртатса пыраҫҫӗ.
Ҫӗр ҫӗмӗрсе каччӑсем
Ташлать хапха умӗнче.
Пурӑнӑҫсем, ах, аван
Аслӑ Силпи ялӗнче!

Аякран пӑхсан Ҫӑтмах евӗр курӑнакан Силпи халӑхӗ еплерех пурӑннине яла кӗрсен пӗлме пуҫлатпӑр. Ҫиелтен чаплӑ курӑнни шалтан чаплах та мар иккен, Силпи ялӗнче Тамӑк-мӗн, унти халӑхӑн пурнӑҫӗ Ҫӑтмаха мар, Тамӑка асилтерет иккен. Мӗншӗн тесен:

Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере
Вӑйли ҫук та этемрен:
Шывсем ҫинче, ҫӗр ҫинче
Хуҫа пулса вӑл тӑрать.
Анчах вӑйлӑ этем те

Хăй тĕнчине пăхăнать.
Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать, —

тет пурнăçа витĕр пăхса сăнарлама явап тытнă поэт. Юлашки икĕ йĕркине поэма тăршшĕпех, темиçе тĕрлĕ сăлтавсемпе тата пулăмсемпе çирĕплетет. Нарспипе Сетнере те, Михетерпе карчăккине те, Тăхтамана та укçапала эрех пĕтерет.

Б. Иринин вырăсла куçарнă «Нарспи» кĕнеке хыççăмахĕнчен — М.Я. Сироткинăн «Классик чувашской литературы» статйинчен: «Реализм поэзии К. Иванова достигает особо большой силы в критике разрушительной «власти денег» в семейно-бытовой и общественной жизни чувашской деревни. Поэма обличает дикие нравы деревенских богатеев — Михедера, Тахтамана и других, — расценивающих человека на предмет торговли. Она опровергает морально-этические нормы, построенные на утверждении деления народа на богатых и бедных и превосходства первых над вторыми».

— 5 —

Г.Ф. Юмарт пухса кăларнă «Константин Иванова аса илеççĕ» кĕнекене кĕнĕ йышлă тусĕсем, тăванĕсем, пĕлĕшĕсем поэт пурнăçне, ĕçне-хĕлне мĕнле курнă, çапла асаилсе каласа кăтартаççĕ.

Ашшĕ пуян пулсан та, К. Иванов укçа енчен ирĕклĕ пурăнман. Чĕмпĕр шкулĕнчи шалу укçи пĕчĕк пулнă. Куçарусемшĕн, ӳкерчĕксемшĕн ăна тӳлемен. «Унăн вилĕмсĕр поэмишĕн тата халапĕсемшĕн Иван Яковлевич ăна пусмаран (сукноран) пĕр сăхман тата пĕр шăлавар çĕлетсе панă. Пĕтĕм çав икĕ япала ун чухнехи хакпа 10 тенк-

ёрен ытла пулман», — вулатпăр И.Т. Трофимовăн «К.В. Иванов Чĕмпĕр шкулĕнче» асаилĕвĕнче. Сăмахĕ «Сказки и предания чуваш» кĕнекере пичетленнĕ «Нарспи» тата виçĕ юмахĕ пирки пырать. Поэта пĕлекенсенчен нумайăшĕ К. Иванов укçашăн мар, тăван халăхне чăвашласа çырса кăларнă литература произведенийĕсем кирлĕ пулнине ăнланса чунтан тăрăшса ĕçленĕ тет.

Н.С. Сергеевăн «Поэтпа юнашар» асилĕвĕнчен: «Константин Васильевич тăван чĕлхене юратса тĕпчетчĕ. Вăл авалхи сăмахсене, витĕмлĕ сăмах çаврăнăшĕсене пухатчĕ, тĕрлĕрен йăла-йĕркене епле ирттернине çыра-çыра илетчĕ. Ку ĕçе вăл хăйĕн юлташĕсене те явăçтаратчĕ. Çапла калатчĕ: «Нумай ĕмĕр хушши çырулăх пулманнипе чăвашсен сахал мар сăмахĕ манăçа тухнă. Авалхи сăмахсене çырса илсе пухмасан вĕсем манăçа тухаççĕ».

Поэмăра укçапала эрех Нарспие (Чуна) пĕтереççĕ. Тăхтаман евчисем Михетере укçапа илĕртсе, эрехпе ӳсĕртсе пуçне çавăраççĕ, çамрăк Нарспие ватă, анчах та пуян Тăхтамана качча пама сăмах татаççĕ. Ӳсĕр пуç — ăссăр пуç. Силпирен Хушăлкана пынă туй халăхĕ те:

«Виле ӳсĕр хăтасем
Урăм-сурăм кĕрлеççĕ,
Виле ӳсĕр пулсан та
Мĕн каласне пĕлеççĕ:
«Эй, кĕрӳçĕм Тăхтаман,
Сана ӳпкев çук пиртен,
Пирĕн хĕре хытă пăх,
Тату пултăр виличчен», —

тенинче вăрмана тарнă Нарспие хытă пăхма асăрхаттарни илтĕнет. Виле ӳсĕр туй халăхĕ Тăхтамана Нарспие хытă пăхма ыйтнинче — йĕкĕлте-

се каласа усал сунни. Нарспи пуян çынна кайнăшăн ăна хăшĕ-пĕри ăмсанать, кĕвĕçет. Çакна эпир çăлкуç патне шыв кӳме аннă арăм сăмахĕнче илтетпĕр:

— Мĕншĕн, Нарспи, хуйхăран,
Каччу ытла ватă-им,
Парнӳ ытла сахал-им?

Кĕвĕç, ăмсану туйăмĕсене тĕслĕх выраннe Дантен «Тасалу» пайĕнчи пĕр кĕвĕç мĕлке калана çак йĕркесене илсе кăтартас килет:

Зависть сжигала кровь мне; как представлю,
Что радостно и весело другому, —
Синею в злобе, чем себя бесславлю.
Все — сорняки, жмых, все — гнилое сено,
И негде злаку доброму родиться
Средь всякой дряни, преющей растленно.

Пĕркенчĕк айĕнче йĕрсе ларакан Нарспие тантăшĕсем хĕрçум юрри юрланă вăхăтра:

«Эсĕ юта кайсассăн
Мĕн тăвĕ-ши Сетнерӳ,
Ырă Нарспи аппаçăм,
Ăçта-ши сан телейӳ?» —

тесе хĕрхенеççĕ, пĕр-пĕрне савакан икĕ чуна шеллеççĕ. Икĕ çамрăк телейĕ Михетерпе карчăккин, туй халăхĕн ӳсĕр ури айĕнче таптанать. Туй халăхне ĕçсе-çисе пултăр:

...Туй тăваççĕ çĕмĕрсе,
Унăн вĕçĕ-хĕрри çук.
... Кунĕн-çĕрĕн выляма
Шăпăрĕ те чарăнмасть,
Кунĕн-çĕрĕн ташлама
Пуса каччи ывăнмасть.

...Вилес пекех ватă çын
Пӳрт хыçĕнче çыварать.
...Выртнă çĕрте сиккелет,
Анчах тăма вăйĕ çук.

Нарспипе Сетнер хуйăхĕ — вĕсен хуйăхĕ çеç. Вĕсем хурланса макăрнине никам та илтмест. Поэт çакна çакă йĕркесенче палăртать:

Хĕр ларать те, хĕр йĕрет,
Пĕркенчĕкне çĕклемест.
Хĕрçуммисем юрласа
Унăн сасси илтĕнмест.

Вăрă-хурах та Михетерĕн çичĕ тарçине эрех ĕçтерсе ӳсĕртет. Эрехе хапсăннă тарçăсем хăйсен хуçипе карчăккине вĕлересрен хӳтĕлеме пултараймаççĕ. Ямăт ĕçнĕ-çинĕ тарçăсен хыпманлăхĕ никама та тарăхтармасть. Ӳсĕр пулнă, çавă кăна! Апла пулсан ӳсĕр пулма намăс та мар, çылăх та мар иккен. Силпире — Тамăк шуйттанĕсем хуçаланаççĕ. Çылăха кĕме хăнăхнă ял халăхĕ усал тăвасран хăрамасть. Чунсăрлăх асать. Ӳсĕрле тунă ĕçшĕн ăс тухиччен ĕçекенĕ те, ĕçтерекенĕ те айăплă мар пулса тухать. Укçапала эрех — усал вăйсен хăвачĕ, вĕсене хирĕç тăма çынна çав тери йывăр пулнине палăртса хӳхлет поэт Сăмахĕ.

6

Дантен «Божественная Комедия» эпиграфĕ:

О мудрые, сил разума, вам данных,
Не пожалейте, в сущность проникая
Того, что скрыто в стихах этих странных.

А.А. Илюшин «Поэт и его творение» статьинче çырнинчен: «Любое литературное произведение можно иллюстрировать. Иллюстрировали и «Комедию» ...Составлялись и планы дантовской

системы мира в целом, включая «карту» звездного неба и концентрические круги орбит, по которым будто бы вращаются планеты и Солнце вокруг Земли, а в самой середине — кружочек Земли с намеченным на ней углублением Ада и противоположным ему выступом Чистилища: вот она вселенная «Комедии»...

Вселенная «Нарспи», как «углубление Ада» — деревня Сильби тесе калама пулать. «Комедипе» «Нарспие» танлаштармалли йĕркесем татах та пур: «О том, что происходило в Аду, Чистилище и Раю тогда, когда у живых землян была весна 1300 г. Ăнсăртран мар ĕнтĕ К. Иванов хăйĕн поэмине çуркуннерен пуçлать:

Пуш уйăхăн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса.
...Силпи ялĕ — пуян ял,
Ларать вăрман ăшĕнче.
Кантур пекех çурчĕсем
Ват йăмрасем айĕнче.

Малалла вара çутçанталăк илемĕ — Хĕвел, Çĕрпе пĕлĕт пĕр çыхăнура пулнине асамлатса сăнарлани:

Çырма юхать кĕрлесе
Аслă ялăн çумĕпе,
Хĕвел, тĕрĕ тĕрлесе
Вылять унăн шывĕпе.
Тăрă шывăн ăшĕнче
Кăвак пĕлĕт явăнать,
Ватă йăмра, тайăлса
Тĕсне пăхса савăнать.

«Нарспие» чăвашла, вырăсла, ытти нумай

чĕлхесене куçарса, тĕрлĕ художествăллă стильсемпе усă курса илемлетнĕ ӳнерçĕсен ĕçĕсен витĕмлĕхĕ вулакана тыткăна илет. Поэма сĕмне ӳкерчĕкленĕ кашни вĕри самант куç умне тухса тăрать, çырнипе ӳкернине пĕрлештерсе чун сисĕмне çивĕчлетет.

К. Иванов хăйĕн поэмине Чĕмпĕрти шкул хуралçинчен Иванран (Чалтун), Кайрăклари асламăшĕнчен тата Макçăм халапçă-юмăç старикрен ăырса илнине, икĕ туйра хăй пуса каччи пулса курнă чухне çырса пынисене, астуса юлнисене пĕтĕмпех пĕрле пухса Силпире пулса иртнĕ пĕр синкерлĕ тапхăра вырнаçтарма пултарнă.

Поэт йăмăкĕн В.М. Максимован асилĕвĕнчен: «Асаннерен те çапла: «Ĕлĕкхи пурнăç çинчен каласа пар-ха», тесе ыйта-ыйта пĕлсе çырнисем нумайччĕ. «Нарспи» сюжетне пиччене асанне каласа кăтартнă пулĕ тесе шухăшлатăп эпĕ. Асанне пире Силпи ялĕ çинчен: — Унта малтан чăвашсем пурăннă. Кайран улпут пырса тухсан, чăвашсем тарса пĕтнĕ, — тетчĕ. ...Çырасса «Нарспине» Чĕмпĕрте çырнă пулĕ, килте çырнине курман».

Йăмăкĕ пиччĕшĕн пурнăçĕн юлашки саманчĕсене аса илсе каласа хăварни: «...Пиччен кăкăрĕ йывăррăн çĕкленет, пырĕ хăйкăлтатать, — сывлама сывлăш çитмест. Сывлăшĕ тухса кайиччен пĕр-ик минут малтан пичче сасартăк сылтăм аллине çĕклерĕ те уççăнах çапла каларĕ: “Йăнăш пулчĕ-им ĕнтĕ?..” — терĕ. Кусем унăн юлашки сăмахĕсем пулчĕç. Сывлăша çĕкленнĕ алли стена çумне çапăнса вăйсăррăн вырăн çине ӳкрĕ, поэт сывлама чарăнчĕ. Вăл мартăн 14-мĕшĕнче тул çутăлас умĕн вилчĕ». Малалла пурăнас-ĕçлес ĕмĕчĕ-шанчăкĕ хуçăлнине туйса çĕр çинчи пур-

năçпа аллине çĕклесе ĕмĕрлĕхех сывпуллашнă самантра ун чĕлхи вĕçне килнĕ сăмахра — асаплă ыйтупа хурав.

К. Иванов «Нарспи» поэмăра этем Турă çырнă ырăлăх саккунĕсене мĕнле-мĕнле сăлтавпа пăсса çылăха кĕни, таса чунне варалани, варалама юраманни çинчен питĕ çивĕччĕн асăрхаттарса каласа кăтартать. Çăтмах евĕр курăнакан Силпи ялĕнче пулса иртекен тамăк амакĕсем, армак-чармакĕсем унталла та кунталла кăнтарса тăни питĕ лайăх курăнать.

Н.В. Шупуççыннин «Юхăм пуçламăшĕнчи кунсем» асилĕвĕнчен: «К. Иванов çĕнĕрен ӳкерӳ ăсталăхĕпе кăсăкланма тытăнать. Петербургри Илемлĕх академине кĕме шут тăвать, хăйĕн юлташĕпе, Федор Павловпа, «Нарспи» сюжечĕпе опера лартасси пирки ĕмĕтленет. Хавхалансах чăваш букварьне ӳкерчĕклет, хăш-пĕр тексчĕсене хăех куçарса хатĕрлет. Çав хушăрах Кивĕ Халал кĕнекисене куçарас тата редакцилес ĕçе тимлет. ...Поэта килне шăллĕ Квинтилиан илсе каять. Тăван çĕршывĕ вăй парасса шанать Кĕçтенттин, хĕллехи вăрăм каçсене тӳссе ирттерсенех ăшă килеслĕн, чĕрĕлĕхлĕ сиплĕ çуркунне çитеслĕн... Вăл ĕнтĕ алла ĕç тавращĕ тытма та хăтланса пăхать, куçарма пуçланă Моисейăн «Пиллĕккĕнекелĕхĕн» алçырăвĕ те умрах выртать... Чăнах та Кĕçтенттин çурхи кунсен ăшшине кĕтсе илетилетех. Çурхи ачаш хĕвел пайăркисем ăна юлашки çула ăсатаççĕ».

7

«Нарспири» сăнарсем, Силпи çыннисен хăтланăвĕсем Данте «Камитĕнче» муритленекенсене витĕрех кăларса илнĕн туйăнать.

Франческăпа ун юратнă арçынĕ Паоло, упăшкин шăллĕ, Тамăкра та пĕрле, унта та пĕрнепĕри юратаççĕ, вĕсене Франческа упăшки, кĕвĕç Джованни вĕлернĕ. Юратушăн вилнĕ мăшăр айăплă-айăпсăр Нарспипе Сетнере аса илтерет. Вĕсем, пурнăçри пекех, леш тĕнчере те асарписер çил-тăвăл ăшĕнче тертленеççĕ. Вĕсен çылăхĕ — арлă-арăмлă вăрттăн çыхăнура тăни. Чипер Франческăна та шелсĕр ашшĕпе амăшĕ улталаса киревсĕр, уксах Джованнине качча панă. Хĕрне тăван килĕнчен Джованни шăллĕ Паоло пырса илнĕ. Франческăпа Паоло пĕрне пĕри юратса пăрахнă, анчах хĕре Джованнипе пĕрлештернĕ. Франческăпа Паоло вăрттăн тĕл пулма пуçланă. Пĕр кунхине Джованни иккĕшне те кинжалпа чиксе вĕлернĕ. Вĕсем Дантепе пĕр вăхăтра пурăннă, телейсĕр мăшăрăн çылăхлă юратăвне поэт хăйĕн поэмине кĕртнĕ.

Тăхтамана вĕлернĕ усал хĕрĕшĕн Михетерпе карчăккине тавăрма пынă вăрă-хурах Сетнере çапса пăрахать. Сетнер вилĕмĕ Нарспи шăпине те татать.

«Тамăкра» Михетерпе карчăкки те пĕрлешсе ларнă йĕрĕнчĕк, нĕрсĕр Тискер пулса çапкаланса çӳреççĕ. Хăй пурлăхне лаша, выльăх-чĕрлĕх вăрласа сутса тунă путсĕр Тăхтамана та шуйттансем чукмарпа пĕр чарăнми ислетеççĕ. Халăха сăнарланă вырăнсем те пĕрешкелех курăнаççĕ. Данте поэмин витĕмĕ «Нарспире» малтан пуçласа вĕçне çитичченех палăрать.

Çĕр çинче пулни-иртни «Тамăкра» тӳнтерле ӳкерчĕксенчен шерепеленет. Турă каçарма пултарайман çылăха кĕнĕ мĕскĕн чунсем Италире мар, ытти çĕрте мар, аслă Силпи ялĕнче (Аслă Çутă Тĕнчере) пурăннă тейĕн. Тамăк çулăмĕ-

тĕтĕмĕпе ĕннĕ сăн-питлĕ Данте унти çылăх каçарттармалли тăхăр çаврана кĕре-кĕре вилнисемпе калаçать, вĕсен асапне хăрушла курăмлă ўкерчĕклет. К. Иванов та, Силпипе Хушăлка çиййĕн кăйкăрăн вĕçсе çўренĕ евĕр, унти пурнăça тимлĕн сăнать, çылăха кĕрекенсене питлет, сивлет, кулянать, вĕсене леш тĕнчере мĕн кĕтнине пĕлнĕрен шеллет, асăрхаттарать...

Çамрăк шухăшлавçă Чĕмпĕр шкулĕнче тĕнче литературипе кăсăкланнă, питĕ нумай вуланă. Вырăс, ют çĕршыв поэчĕсене чăвашла куçарнă, Библи куçарăвне те яваплăн хутшăннă. Анлă тавракурăмлă ăс-тăнне уçла-уçла танлаштарусем, пĕтĕмлетўсем тунă.

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен.
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать, —

теме хăю çитерет пулин те, малалли шухăшне хăйне хăй хирĕçлесе мар, Тĕнче Чăнлăхĕ çине тĕревлесе тĕреклетет:

Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчине пăхăнать.

Пăхăнманни, Турă саккунĕсене пăсаканни çылăха кĕрсе хăйне хăй асап кўрет. Çылăха кĕнисемшĕн Çĕр çинче те, çĕре кĕрсен те — Тамăк. «Хăй тĕнчине» тени леш тĕнчепе çутă тĕнче пĕр тытăмра тăнине пĕлтерет. Ма тесессĕн Çут тĕнче те, Леш тĕнче те — Чун пурăнакан асамлă-асаплă Тĕнче.

М.Я. Сироткинăн «Классик чувашской литературы» статьинчен: «Характер связей К. Иванова с русской литературой говорит о большой глубине его общей и поэтической культуре. «Он стал... классиком чувашской литературы потому, — говорит

один из исследователей его творчества И.Н. Сутягин, — что никогда не замыкался в национальной скорлупе, что его подлинно самобытное и национальное творчество питалось не только истоком чувашской народной поэзии, но и обогащалось достижениями русской литературы». В силу этого творчество поэта не могло не быть интернациональным».

«Константин Иванов. Фотоальбом» кӗнекери» «Нарспине» пушкӑртла куҫараканӗсенчен пӗри, Пушкӑрт халӑх поэчӗ Мустай Карим хаклавӗнчен: «Нарспире» пирӗн куҫ умне асамлӑ, тухатуллӑ чӑваш тӗнчи тухса тӑрать. Турӑсем авалтан килекен тӗнче тытӑмне йӗркелесе пыраҫҫӗ, вӗсемех ҫутҫанталӑкӑн вӑрттӑн илемне хаяр куҫ ӳкесрен сыхлаҫҫӗ, турӑсемех ҫынсен шӑпине татса параҫҫӗ. Анчах поэма геройӗсем турӑсене те, вӗсем йӗркеленӗ тӗнчене те хирӗҫ тӑма хӑю ҫитереҫҫӗ. Шӑпах ҫакӑнта ӗнтӗ поэмӑн этемлӗх шайӗнчи трагедиллӗ вӗҫӗн пӗлтерӗшӗ».

— 8 —

Дантен «Камитне» вырӑсла куҫарнине, вырӑс литературинчи «Дантеана» ятпа ҫӳрекен хайлавсене (П.А. Катенин, С.П. Шевырев, А.С. Пушкин, Д.Е. Мин, тата ыттисем) вуласа киленнӗ-тӗлӗннӗ яш, чӑваш халӑхӗ валли ҫавӑн евӗрлӗ поэма ҫырма тӗллев тытать. Пӗр каччӑпа пӗр хӗрӗн телейсӗр юратӑвӗ ҫинчен илтнӗ чӗлхе вӗҫҫӗн ҫӳрекен халапа тӗнче литературин кӗтретлӗ тӗслӗхӗ ҫинче никӗслесе хӑварать.

К. Иванов Данте хайлавне вуланине ҫирӗплетекен тӗслӗх пур. Вӑл Юман Мӗтри асаилӗвӗнче упранса юлнӑ: «Кӗҫтенпе калаҫнӑ чух эпир пуринчен ытларах тӗнче литератури ҫинчен калаҫ-

аттăмăр. Çапла Дантен «Тамăкĕ», унтан Гетен «Фаусчĕ» çинчен унпа тавлашкаласа калаçнине аса илетĕп». Çакă асаилӳ «Нарспи» вăрттăнлăхне уçмалли алăкăн çăра уççийĕ пулчĕ. Юман Мĕтри асаилĕвне шута илсе Дантене тимлĕн вуларăм, «Нарспипе» танлаштартăм. Вуланăçемĕн Дантерен «Нарспие» куçнă хăш-пĕр йĕркесем, сăнарсем пĕрин хыççăн тепри уçăлса пычĕç.

Пушкин «Тамăка анса курнă» Итали поэтне «Суровый Дант» тенĕ. Чăвашла «Хаяр Дант» тесе куçаръннине шута илсен, К. Иванов хăйĕн «Нарспийĕнче», Ырă Хаярпа Усал Хаяр кĕрешĕвне сăнласа кăтартас тĕллевне пурнăçланă. Апла пулсан К. Иванов та чăваш халăхĕшĕн — «Ырă Хаяр Кĕçтен».

Данте çырнипе Иванов çырнин пĕрпеклĕхне палăртакан йĕркесем нумай, ӳкерчĕк те пур. Тĕслĕхрен:

...В начале года, совсем молодого,
Солнцевы кудри Водолей ласкает.
...Крестьянин — тот, чей скудный хлеб
несдобен
И корму нет — глядь: поле побелело;
Плюнет с досады: «Будь ты неподобен»...
Бродит по дому, ворчит то и дело,
Растерян, бедный, и кряхтит, и стонет,
Ан выйдет снова — все повеселело,
Весь мир нарядный в многоцветье тонет...
Рад и хозяин: берет хворостину —
Гуляйте, овцы! — и пастись их гонит.

К. Ивановăн «Нарспи» пуçламăшĕнчи тĕлĕнмелле илемлĕ йĕркисем çапла янăраççĕ:

Килчĕ ырă çуркунне,
Килчĕ ячĕ ăшăтса,

Хĕвел савать тĕнчене
Хĕл ыйхинчен вăратса.
...Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен
Ырă шăрши сарăлать.
...Çемçе курăк çийĕнче
Путек-сурăх сиккелет.

К. Ивановпа Данте сăнавĕсем пĕрешкел йăлтăртатса çиçни курăнать. К. Иванов Дантене хăйĕн тавракурăмĕ-пултарулăхĕ шайĕпе сыпăкăн-сыпăкăн чăвашла куçарса сăвăласа илемлетнĕн туйăнса каять.

Данте сăвăлла-прозăлла хывнă «Новая жизнь» поэмине, «Божественная Комедия» хайлавне хăй çирĕплетнĕ чăн-чăн итали чĕлхипе çырать. К. Иванов та хăйĕн вилĕмсĕр поэмине хăй никĕслеме пулăшнă çĕнĕ çырулăх мелĕпе тĕрленĕ.

К. Ивановăн «Хальхи самана» сăввинчи йĕркесенче вăл чăваш ялĕсенче шкулсем уçăлнишĕн, хура халăх хут вĕренме тытăннишĕн, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче кĕнекесем çаптарса çын хушшине салатнишĕн, халăх историйĕнче çĕнĕ ÿсĕмлĕ тапхăр пуçланнишĕн хĕпĕртени палăрать. И.Я. Яковлева вăл ырă ĕç пуçарнăшăн тав тăвать. Чăваш букварьне кăларас ĕçре унăн хăйĕн тÿпи те пĕчĕк мар. Вăл И.Я. Яковлевпа пĕрле çакă пархатарлă ĕçре нумай вăй хунă:

...Ырă чăваш тупăнчĕ,
Ырă ĕçе тытăнчĕ.
Чăн чăвашла сăмахпа
Хăй тăванне чăваша
Пырса çапрĕ чĕрине...
...Хура халăх хушшинче
Хут вĕренме тытăнчĕç,
Шкулсем нумай уçăлчĕç.

Вĕсен чĕри Чĕмпĕрте,
Аслă чăваш шкулĕнче.
Кĕнекесем çаптарчĕç,
Çын хушшине салатрĕç...

Данте çырнă «Новая жизнь» поэмăпа К. Иванов хывнă «Хальхи самана» сăвă ячĕсем те, шухăшĕсем те пĕрешкел сăваплă пулни куçкĕрет. Тĕллевĕ — пĕр, ĕмĕрлĕхе асăнмалăх туса хăварнă ĕçĕ те — пĕр, халăх хаклавĕ те — пĕр.

Г.А.Молостовкин асаилĕвĕнчен: «Пысăк мар пӳлĕм. Константин Васильевич сĕтел хушшинче пĕшкĕнсе ларать. Аллинче çап-çутă пĕчĕк çĕçĕ. Вăл хулăн картон евĕрлĕ япала татăкĕ çинче темскер каскалать. Сĕтелĕн пĕр кĕтесĕнче çавăн пек татăксем темĕн чухлех купаланса выртаççĕ. «Мĕн тăватăр эсир, Константин Васильевич?» — тесе ыйтрăмăр. «Ку, ачасем, букварь валли ӳкерчĕксем. Акă, курăр, ку — упа, тилĕ, кашкăр, акă ку ача лашалла вылять... Эсир букварь вĕреннĕ вĕт, унти ӳкерчĕксем çаксем пулаççĕ те ĕнтĕ». Малалла вуласа кайнинчен: «...унăн пĕчĕкçĕ пӳлĕмне астăватăп. Стенасем çинче Пушкин, Лермонтов, Кольцов, Некрасов, Гоголь, Тургенев, Лев Толстой, Гончаров тата ыттисен портречĕсем çакăнса тăраççĕ. Вĕсене пурне те кĕленчеллĕ рамка ăшне кĕртсе лартнă. Ӳкерчĕксене пурне те ахаль хура кăранташпа калама çук тирпейлĕ, юратса тунă. Каярахпа эпир çакна пĕлтĕмĕр: çав портретсене вăл уроксенчен пушаннă вăхăтра хăй ӳкернĕ, рамкисене те шкулăн столярнăй мастерскойĕнче хăй аллипе тунă, хăех сăрланă. ...Стенасем çинче çавăн пекех тата фотоӳкерчĕксем нумай. Вĕсене вăл хăй фотоаппаратчĕпе ӳкернĕ. ...Эпĕ тата Константин Васильевичăн пысăк картини-

сенчен пĕрне астăватăп. Вăл хăйĕн «Нарспи» поэмин инсценировки валли декораци тунăччĕ. Пысăк тăваткал пир татăкĕ çине çуллă сăрпа Силпи ялне тата сĕм вăрман ӳкернĕччĕ. Çавăн пекех вăл «Иван Сусанин» опера валли те декораци тунă пулнă. Анчах питех те кӳренмелле ĕнтĕ, çав картинăсенчен пĕри те упранса юлман. ...Каяс умĕн вăл, чирлĕскер, пирĕн класа кĕрсе хăйĕн вĕренекенĕсемпе сывпуллашрĕ. Пире лăплантарса: «Эпĕ, ачасем, часах килетĕп, сывалатăп та таврăнатăп», — терĕ.

Э.Г. Артелинан «Эх, Хушăлка пысăк та!» асилĕвĕнчен: «Кĕçтенттин пирĕн пата эпĕ 22 çулта чух çимĕк кунĕ килсе пĕр эрне пурăнса кайрĕ. Ун чухне вăл Чĕмпĕрте вĕренетчĕ, ман шăллăм — Хусанта. ...Вĕсем кĕнекесем çинчен анчах калаçатчĕç. Кĕçтенттин хăйпе пĕрле темле хура хуплашкаллă кĕнеке те илсе килнĕччĕ. Анчах ятне астумастăп. «Çак кĕнекене вуласа тухсан пурнăçа питĕ пĕлекен çын пулатăн», — терĕ вăл пĕрре. Пирĕн пахчара йăмра, хăва йывăçĕсем нумайччĕ. Вăл ирсеренех унта тухса çӳретчĕ, курăк çине выртса тем çыратчĕ».

9

Дантен «Камичĕ» «Тамăкпа» уçăлать. Тамăкри виççĕмĕш сийĕн хапхи умĕнче çылăхлă айвансем тухса тарасран сыхăра тăракан Цербер ятлă кашкăр пек усал Демон-йытта Данте тăвату çĕрте питĕ хăрушшăн сăнарлать:

...Зри: вот он зверь, пред кем я отступил...
Столь вреден он, искидок гнусный ада,
Что никогда, ничем не насыщен,
И после яств еще в нем боле глада.
волк ненасытно-жадный,

Пугающий чрезмерной худобой,
Губительной алчбою безотрадной.
Толикий страх нанес он мне собой...
...Пред нами Цербер, этот гад великий
Оскалил пасть, метнулся к нам вперед
И каждым членом бился в дрожи дикой.
...У Цербера, коль помните доныне,
Зрится полморды с выщипанной шерстью.

Нарспин юлашки монологĕ-хӳхлевĕнчи:

...Мĕншĕн ҫапла ху хĕрне
Парса ятăн кашкăра?
Саншăн ҫав пур ырăлăх
Мĕнпурĕ те укҫара, —

тенинче усал кашкăр — Тăхтаман та, ҫынна тăнран кăларакан укҫа та, тесе йышăнма пулать. Тăхăр сийрен тăракан Тамăк асапĕ витĕр тухса ҫичĕ сийрен тăракан Тасалу витĕр тухсан кăна ҫын чунĕ Турă патшалăхне хăпарма пултарать. Тамăк алăкĕ ҫине «Оставь надежду навсегда» тесе ҫырса хуни Тамăкран ҫăлăнса тухма вышкайсăр йывăррине ҫирĕплетет.

«Кашкăр пуҫĕн ӳкерчĕкĕ». Пир, ҫуллă сăрă. (191(?). К.В. Иванов тунă пулĕ теҫҫĕ» ӳкерчĕк, художествăллă ĕҫ сыхланса юлнă. «Рукописи не горят» темелĕх тĕлĕнтермĕш, курăмлă оригиналпулăм тупăнчĕ. Тав Турра! К. Ивановăн «Кашкăрĕ» ҫав тери тискер, вăл Дантен йĕрĕнчĕк, киревсĕр Церберне аса илтерет.

Хăйĕн несĕлĕн йăх-рат йывăҫĕ Кашкăр ятлă мăн аслашшĕнчен тымарланса ӳснине тĕпчесе ҫырса хăварнă шухăшлавҫă-философ хаклă тăванĕсене выҫă кашкăр сăнĕллĕ ӳнерлесе хăварас ҫук. Ун йăхĕ кашкăр тытма ăста пулнине палăртса халăх вĕсене хушма ят панă. Хушма ят вара

йăх-тавраш ячĕ пулса кайнă. Кашкăр тесе унăн авалхи йăхташĕсенех чĕннĕ. 17-мĕш ĕмĕрте Канаш районĕнчи Пайкилтрен Пушкăрталла куçса кайнă Антон Данилов-Кашкăр çемйинченех пырать. Пелепей тăрăхĕнче авал Пайкилт ятлă ял та ларни Н. Ашмарин словарĕнче тупăнчĕ. К. Иванов йăх-тĕпĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлес текене чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн аслă сотрудникĕ, филологи наукисен докторĕ В.П. Иванов тата Пушкăрт таврапĕлӳçи Мударис Сафин тĕпчевçĕ Пелепейри, Уфари, Мускаври архивсенче шыраса тупса пухутласа кăларнă «Истоки. История рода К. Иванова и Я. Ухсая» кĕнекене вулама сĕнетĕп.

Кĕнеке хаклавне Пайкилтре ирттертĕмĕр. В.П. Иванов кĕнеки çинчен каласа пачĕ, РФ тата Чăваш халăх артистки Н.И. Григорьева «Нарспи» спектакльти Нарспи монологне каларĕ, РФ тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх артистки В.В.Смирнова «Нарспи» оперăри Нарспи арине юрларĕ. Эпĕ, К. Иванов каçне ертсе пынă май, маларах пурнăçа кĕртнĕ ĕççене шута илсе çапла каларăм:

> Слакпуçĕнче — «Пайкилт кĕтесĕ,
> Пайкилтре — «Слакпуç кĕтесĕ»
> Сад пахчисем ешерет.
> Иванов-Кашкăр йăх-рачĕ
> Чăваш Енпе Пушкăртстанри
> Икĕ яла пĕрлештерет.

К. Иванов ӳкерчĕкĕ Данте «Тамăкĕнчи» Цербер тесен йăнăш пулмасть. Вăл «Нарспи» вăрттăнлăхне уçма пулăшакан хирĕçлеме май çук чĕрĕ аргумент. Авалхи халапа ĕненсен, тарăхнă Геракл Церберăн пĕр енчи сухалне çăмласа илнĕ пулать. К. Иванов ӳкерчĕкне сăнаса пăхсан çавă

тăпăлтарса татса илнĕ сухал вырăнĕ лайăх курăнать.

> У Цербера, коль помните, доныне
> Зрится полморды с выщипанной шерстью.

Поэтăн Чĕмпĕрти ÿкерчĕкĕсен альбомне унпа пĕрле вĕреннĕ М. Трубина (çыравçă) унăн сĕтел сунтăхĕнчен вăрласа тухса хĕрсем пурăнакан пÿлĕме илсе кайнă. Унăн ÿкерчĕкĕсем çинчен шкул ачисем калаçнине илтсе кăсăкланнипе, курас килнипе. Пăхса тухнă, тĕлĕннĕ, ирхине минтер айĕнчех манса хăварнă. Кăнтăрла, шкултан килсен, пытарса хунă альбом тупăнман, çĕтнĕ. Унăн хучĕсене, альбомĕсене тытма юраманни çинчен Чĕмпĕрти тусĕ-юлташĕсене асăрхаттарса каланă, пытарса упранă «секретсем» ĕмĕрлĕхе çухалнă.

К. Иванов вырăс, тĕнче литературине куçарнисем те упранса юлман. «...Лермонтов, Некрасов тата ытти писательсен; Коперник, Суворов, Мономах, Петр Первый, Венера Милосская, Леонардо да Винчи сăнĕсем пурччĕ. Вăл куçарнă произведенисем хушшинче Аксаковăн «Хĕрлĕ чечек», Андерсенăн «Акăшĕсем» пурччĕ», — аса илет М. Трубина. П. В. Михеева, поэт йăмăкĕ, Сергеев ятлă студента Шупашкара парса янă пиччĕшĕн алçырăвĕнче «Песнь песней» поэмăна куçарнă пысăк çур листа формиллĕ тетрадь те пурччĕ пулас тесе аса илет.

«...Лермонтовăн «Калашник хуçа çинчен хунă юррине» уйрăмах юратса куçарчĕ. Шухăш пуянлăхĕпе тата янравлăхĕпе çак куçару оригиналпа пĕр шайра тăрать. К.В. Иванов Библин тĕнпе çыхăнман пайне — «Юрăсен юррине» те çавăн пекех юратса куçарчĕ. 1912 çулта, çакна куçарас умĕн, вăл мана хăй авалхи еврей чĕлхине вĕренме кăмăл туни, «Юрăсен юррине» оригиналтан

куçарма шутлани çинчен пĕлтернĕччĕ. «Юрăсен юррине» вăл 1913 çулта куçарса пĕтерчĕ, ăна авалхи вырăс чĕлхипе тухнă кĕнеке тăрăх куçарчĕ», — аса илет Н.С. Сергеев «Поэтпа юнашар» ятлă асаилĕвĕнче. Поэтăн пурăнасси икĕ çул юлнă.

А.Л. Лукин асаилĕвĕнчен: «Пĕррехинче, 1913 çулта, çуллахи каникул вăхăтĕнче, К.В. Иванов пире, шкулти аслă класа куçнă виç-тват ачана, фермăра ĕçлесе таврăннă хыççăн каçпала хăй хваттерне, пĕчĕк пӳлĕме, чĕнсе кĕрет...

— Итлĕр, ачасем! Сире пĕр япала вуласа кăтартам, — тет. Пуçларĕ «Юрăсен юррине» вулама. Хушăран чăвашлине вырăслипе танлаштарса пăхать. Куçарни питĕ ăнланмалла, питĕ хитре». Акă вĕсем, куçару танлаштарăвĕсем! Малалла вуласа кайса К. Ивановăн анлă тавракурăмне палăртакан йĕркесене те шута илес килет: «К.В. Ивановпа Ф.П. Павлов чăваш поэзийĕпе музыкине çĕклесе искусствăн аслă, культурăллă çулĕ çине кăларасшăн çунаççĕ, П.В. Пазухинпа И.Я. Яковлева «Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним» ятлă кĕнекен иккĕмĕш пайне кăларма чунтан пулăшаççĕ. К.В. Иванов ку кĕнекене редакциленĕ çĕрте ĕçлет, корректурăна вулать». Малалла вуласа кайнинчен: «...К.В. Иванов «Калашник хуçа çинчен хунă юрра» пĕтеричченех «Нарспи» поэмине çырма тытăннă пулать».

А.А. Илюшин «Поэт и его творение» статйинчен: «Необходимо сказать по крайней мере о трех крупнейших писателях, отдавших щедрую дань романтизму и не оставшихся безучастными к дантовской традиции. Первый из них — Лермонтов. В его незаконченном романе «Вадим» есть

описание густого и мрачного леса: «На опушке столетние липы, как стражи, казалось, простирали огромные ветви, чтобы заслонить дорогу; казалось, на узорах их сморщенной коры был написан адскими буквами этот известный стих Данте: (дословно: Оставьте всякую надежду, вы, которые входите» — тот же самый стих, который Пушкин передал словами «Оставь надежду навсегда»).

Данте Алигьерипе Константин Иванов биографийёсенче политикăпа çыхăннă тапхăр та пур. А.А. Илюшинăн «Поэт и его творение» статйинчен: «Он жил в средневековой Италии в трудное и тяжелое для нее время. ...В Италии боролись политические партии — гвельфы и гибеллины. Первые — сторонники папской, вторые — имперской власти, но суть разногласий зачастую определялась не столько политическими убеждениями, сколько соображениями личной выгоды, направлявшими линию поведения тех или иных деятелей. ... Данте метался от одного пристанища к другому, порвал с прежними союзниками (гвельфами), но и в новых не нашел того, чего искал. ... «Сам себе станешь партией», — убеждал себя Данте, вложив эти слова в уста одного из своих славных предков. Вроде бы это выход: уединиться, возвыситься над мышиной возней политиканов, тем более что великому поэту необходимо время и душевное равновесие для главного дела жизни - тысяч и тысяч стихов, из которого сложится текст бессмертного творения».

Пиччĕшĕ вилсен, Квинтилиан шăллĕ «Нарспи» алçырăвне, Чĕмпĕрти шкулта, типографинче, килте те шыранă, тупăнман. Чаплă ӳкерчĕкĕсем те çӳп шăтăкне ăсаннă пулмалла, нимĕн те

юлман. Н. Данилов çырса илнисенчен: «Нарспи» çинчен хăйĕн çырса пымалли кĕнекинче те асăнмасть. Ку вăл автор сыхлавлă пулнине пĕлтерет. ...Константин поэма çырас шухăш ăçтан пырса кĕни, ăна хăçан тата ăçта çырни çинчен никам та пĕлмест». Малалла çырнинчен: «Пирĕн шкул йĕри-тавра монастырь хӳми евĕр çӳллĕ хӳме хӳсе çавăрнăччĕ. Çӳллĕ хӳмепе çирĕп режим шкулта вĕренекенсене хулари пурнăçпа явăçасран сыхласа тăнă. ...Анчах 1905—1907 çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсене нимĕн те тытса чараймарĕ. Вĕренекенсем хушшинче революциллĕ шухăшсем сарăлнăçемĕн сарăла пуçларĕç».

1906 çухи октябрьте К. Иванов «Вăранăр, тапранăр!» сăвă çырнă тата «Дубинушка» вырăс халăх юррине чăвашла куçарнă. 1907 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пĕрремĕш класĕнче вĕреннĕ 34 ачапа, каярах 37 ачапа пĕрле шовинизмла шухăшкăмăллă Д.И. Кочуров преподавателе хирĕç çырнă петицие алă пуснă. Çавăншăн ачасене шкултан кăларса янă списокра К. Иванов та пулнă. Анчах та И.Я. Яковлев ун куçару тĕлĕшĕнчен çӳллĕ талант пулнине шута илсе ăна Слакпуçĕнчен Чĕмпĕре каялла, куçару ĕçне кӳлме чĕнсе илнĕ.

М.Д. Трубинан «Тăван поэта аса илнисем» статйинчен: «...1908 çулта пире кашнинех «Сказки и предания чуваш» текен сборника пачĕç... Пĕр ирхине К.В. Иванов хул айне хут хĕстернĕ те И.Я. Яковлев хваттерĕ патнелле пырать. Эпĕ хĕрачасемпе столовăйĕнчен тухатăп.

— Иванов, — чĕнсе илтĕм эпĕ ăна, — «Сказки и предания чуваш» текен сборникра сирĕн хăвăр çырнă япаласем вĕт, оригиналлă произведенисем, мĕншĕн кĕнеке ятне çапла панă, мĕншĕн авторне палăртман?

Иванов тăнлаври çăра та хура çÿçне якаткаласа илчĕ те ман çине хăвăрт пăхса: — Пĕлместĕп... Ăна аслисем авантарах пĕлмелле, — терĕ. Иванов кăмăлсăр пулнине сассинченех туйса илтĕм».

И.С. Максимов-Кошкинский асаилĕвĕнчен: «...Чăнах та, кĕнекен малти хуплашкин тепĕр енче аялта пĕчĕк сас паллисемпе: «Собирал К. Иванов», — тесе çырнă. Урăх вырăнта поэт ячĕ çук. Револоюциччен «Нарспи» поэмăна кам çырнине Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухнă учительсем кăна пĕлнĕ, халăх пĕлмен»; «Эпĕ артист пулма ĕмĕтлене пуçласан вăл мана Чацкий, Гамлет монологĕсене вуласа пама ыйтнăччĕ, хăй Грибоедовăн «Ăса пула инкек» комедине чăвашла куçарма ĕмĕтленетчĕ... (...) «Анчах кирлĕ-ши куçарма? Пирĕн театр çук вĕт... Эх, чăваш театрĕ пулсан!» — терĕ».

Çамрăк поэт куçарма юратнине шута илсен, вăл «Нарспине» ăсталанă вăхăтра Дантен «Турă Камитĕнчи» сăнарсемпе кăсăкланса, усă курса «Нарспири» сăнарсене тĕлĕнмелле ăста калăплама пултарнă тесе çирĕплетмелĕх сăлтав пур. Соломона куçарни пĕрре те ăнсăртран мар. Данте поэминче «Песнь песней» хывнă Соломон патшана Çăтмахри ăсчахсем çапла аса илни пур (комментарисем):

«...И опять слово взял Фома Аквинский. Он рассуждает о великих достоинствах царя Соломона. Понятно, за что почитают Адама и Христа, но почему так прославлен Соломон, один из смертных? Кстати, он здесь же, в четвертой сфере Рая. Припоминается, что в свое время бог сказал ему, живому: «Проси, что дать тебе», — и тот попросил себе ума, мудрости для того, чтобы разумно править народом, речь шла о цар-

ской мудрости, и таковая была ему дарована. ...Божественная любовь готова излиться на всех. Но лишь зоркого и доблестного она подвигнет к светлой цели, а этими качествами — зоркостью и доблестью — обладают лишь немногие. Соломон обладал ими в полной мере, что и возвысило его над остальными царями. Но судить об этом, полагает Фома, очень трудно, велик риск ошибиться».

Соломона куҫарма пултарнӑ ҫутӑ мал ӗмӗтлӗ яш Юман Мӗтрипе Дантен «Божественная Комедия» пирки ыт ахальтен сӑмах пуҫарас ҫук. Тен, «Нарспире» Дантепе усӑ курнине ҫывӑх юлташне пӗлтересси килнӗ пулӗ, анчах та хӑйӗн вӑртӑнлӑхне хӑйпе пӗрлех илсе кайнӑ. «Нарспие» вуланӑ юлташӗсем, ытти ҫынсем Данте поэмине алла илменнипе е «уйрӑм йӗркесене» пачах та асӑрхаманнипе танлаштарса хаклама пултарайман. Тавах, Цербер ӳкерчӗкӗ сыхланса юлнӑ. Тамӑка лекнисем Тамӑкран тараймаҫҫӗ, вӗсене Демон-йытӑ-кашкӑр туллать, каялла Тамӑка хӑвалать. Данте ун ҫинчен «Оскалил пасть, метнулся к нам вперед» тенӗрен, поэт-ӳнерҫӗ К. Иванов Церберӑн ҫӑткӑн ҫӑварне карнӑ пуҫне ӑнӑҫлӑн ӳкерсе кӑтартать.

⟵10⟶

К. Иванов Силпи хӗрне Нарспие чӑвашра сайра илтӗнекен илемлӗ ят панӑ: Нар — хитре, пи — пике; Нарспи — хитре пике пулнине пӗлтерекен ят. Слакпуҫӗнче Нарспи ятлӑ ӑслӑ карчӑк пурӑннӑ тет, ял халӑхӗ ун патне юмӑҫа ҫӳренӗ тет. Пӗр ҫыннах темиҫе ятпа чӗнме хӑнӑхнӑ чӑваш — ҫамрӑк чухне чипер хӗре Нарспи тесе, ватӑлсассӑн — Пртта тесе чӗнме пултарнӑ теме те пулать. По-

эмăри ятсен тупсăмĕ Данте «Камитĕнчи» пĕр ăнлантарупа килĕшӳллĕн çыпçăнать:

...Но был безмолвен, ибо сердце склонно
Чтить госпожу, чтить слоги Бе и че...
И сник главою, как в дремоте сонной.

«Бе и че — это, разумеется, слоги, обрамляющие имя Беатриче» тенине тĕпе хурсан Нар-с-пи (Нар — чипер, с — сарă, пи — пике) çав тери ăнланмалла килсе тухать.

Качча кайнă, ют çын арăмĕ пулнă Данте савнийĕ Беатриче, çирĕм пиллĕкре çĕре кĕнĕскер, «Тамăкăн» пĕрремĕш çавринче — Лимбра тĕтре ăшĕнче ĕнтĕркекен çыравçăсем, ăсчахсем патне анать, авалхи Рим поэтне Вергилие Дантене «Тамăкпа» «Тасалу вырăнĕ» тăрăх сийрен сие куçса кăтартса çӳреме ӳкĕтлет. Вергилий килĕшет. Тӳпере пурăнакан Беатриче Çĕр çинчен леш тĕнчене Тамăк, Тасалу, Çăтмах тăрăхĕсене курма килнĕ тусне «Çăтмах» илемĕсене кăтартма хăех кăмăл тăвать. Леш тĕнчери чунсем — çын мĕлкисем. Çылăха кĕнисене Тамăкра асаплантараççĕ, Тасалу вырăнĕнче тасатаççĕ, çăмăлланнă, çуталнă чуна Çăтмаха çĕклеççĕ.

А.А. Илюшинăн «Поэт и его творение» статйинчен: «Тень Вергилия покинула пределы Ада, встретила Данте и повела его за собой. Спасти его (Данте) — это значило показать ему загробный мир: пусть сделает из увиденного надлежащие выводы. Подошли к входу в Ад. Читают надпись над ним — словно бы этот вход говорит им сам о себе, в первом лице:

Войдите мной в страданье неизбежно;
Войдите мной в град скорби без конца;
Войдите мной к погибшим безнадежно.

И начинается путешествие по кругам Ада». Ӑнсӑртран мар, ятарласах ӗнтӗ:

...Силпи ялӗ — аслӑ ял,
Хула тийӗн инҫетрен.
Ахӑр, кунта чӑвашсен
Мулӗ пур-тӑр ҫав вӗсен.

Мулӗ — хӑма витнӗ, килкарти тавра ҫавӑрнӑ чул хӳмеллӗ ҫуртсем, ем-ешӗл садсем, чӗнтӗрленӗ тӑрӑллӑ сарӑ хапхасем, урам тӑрӑх чупса ҫӳрекен ача-пӑча, ӗҫлеме те эрех ӗҫме юратакан ял халӑхӗ тата ҫак ялта ҫуралнӑ сарӑ хӗр — Нарспи. «Пусть сделает из уведенного надлежащие выводы» тени вара — К. Иванов ҫырса хӑварнине вулакан хӑй валли те, халӑх валли те тӗрӗс пӗтӗмлетӳсем тӑвасса шанни.

Нарспи — Ҫӗр ҫине Силпи ялӗнче пурӑнакан ашшӗ-амӑшӗн килне килнӗ таса, хитре Чун. Вӑл — поэма авторне Ҫӗр ҫинчи пурнӑҫра — Силпи ялӗнчи Ҫӑтмахра-Тамӑкра хӑйӗнпе пулса иртекен пулӑмсене сӑнама-хаклама пулӑшакан ҫын Чунӗ. Таса, илемлӗ чун. Таса та илемлӗ, телейлӗ пурӑнма ӗмӗтленет.

Нарспи-хӗр ҫав телее тивӗҫлӗ, вӑл — аллиури ҫӑмӑлран — тӗрлеме, ҫӗлеме, пир тӗртме, апат хатӗрлеме пӗлет; вӑйӑ саланичченех хӑйӗн сассипе таврана янратса тӗлӗнтерет, канлӗ ыйхинче ырӑ тӗлӗксем курса киленет. Ун ӗмӗтне кам тата мӗн хуҫса таптанине, Нарспи-хӗр-Чун ҫылӑхӗсене К. Иванов ҫав тери ӑста чӗлхепе, вышкайсӑр вӗри туйӑмлӑ ӑс-хакӑл шайӗпе, тӑван чӗлхемӗрӗн асамлӑ сӑмах-юмах хӗрӳлӗхӗпе яр уҫса ӑнлантарса парать.

Ҫылӑхлӑ Нарспи евӗрлӗрех хӗрарӑм мӗлки Дантене «Тасалура» тӗлленнӗ тӗлӗкӗнче курӑнать,

икĕ хирĕçтăрullă сăн-питпе кĕлетке — кайранхи тата малтанхи:

Женщина снилась мне — брр: косоока,
Гугнива, ноги отвратно кривые,
И рук по локти нет, и синещека.
Гляжу, такую повстречав впервые;
Согрета взглядом, как солнцем, очнулась
И приоткрыла уста неживые,
Согбенным станом качнув, разогнулась,
Лицо — как маков цвет, рдеет румянцем,
Как если бы в ней любовь встрепенулась;
Не порченая ни одним изъянцем,
Чарует пеньем и всякого члена
Движеньем гибким — пленительным танцем.

К. Иванов Нарспийĕ çав тери шукăль пике:

...Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă чечек пек.
...Çӳхе тути кулнă чух
Каччăн чунĕ çемçелет.
...Вăйăсенче ун сасси
Кайăк сасси евĕрлĕ.
Ахăлтатса кулнă чух
Çирĕп çын ку темелле.

Нарспи чăнах та çирĕп çын: килти ĕçре, юратура, хӳтĕлӳре, вилĕмре. Хăйне асаплантаракансем патне ун чĕринче пĕр чĕптĕм курайманлăх та çук. «Икĕ хура шăрçа пек хуп-хура куçĕнчен» шăпăр-шăпăр куççуль юхать. Апла пулин те Нарспи хуть те мĕнле пăтăрмахра та мăн кăмăллă, сӳрĕк, усал çын мар.

Укçашăн хăйне Тăхтамана сутнă ашшĕпе амăшне — «аттеçĕм, аннеçĕм», пысăк укçа парса хăйне качча илнĕ Тăхтамана «каччăмçăм» темелĕх мĕн тери пысăк чăтăм кирлĕ! Вăл никампа та

ятлаçмасть, хăйĕн сăмахĕсенче, хӳхлевĕсенче ашшĕпе амăшне пуянлăхшăн антăхнăшăн шеллет. Тăхтамана та шеллет:

Эй, аттеçĕм, аннеçĕм,
Мĕншĕн çирĕр хĕр пусне,
Мĕншĕн патăр хĕрĕре
Çичĕ ютăн аллине?
Эй, каччăмçăм Тăхтаман,
Манпа ырă курас çук.
Эпĕ, чунăм пĕтсен те,
Санпа пĕрле пулас çук.

Турă ăна çĕр çинчи тăван ялĕнче Силпире — Çăтмах пек курăнакан Тамăкра — асап тӳсме тивессе пĕле тăра çирĕп тӳсĕм, ырă, çемçе кăмăл панă. Вăл питĕ нумай шухăшлать, унăн шухăшлавĕсем Тĕнчене тытса тăракан Юрату çинче никĕсленеççĕ. Унăн хӳхлевĕсем вулакан умне ыйтусем кăларса тăратаççĕ. Чăнах та çапла пулса тухать: чунне пĕтерет, анчах та юратман Тăхтамана-тăшмана парăнмасть.

К. Иванов «Нарспийĕ» — Турăпа-Юратупа килĕшӳллĕн пурăнма кирлине тĕрлĕ тĕслĕхсемпе çирĕплетсе кăтартнă вĕрентӳ. Килĕшӳ çук çĕрте Пурнăç çук.

М.Я. Сироткинăн «Классик чувашской литературы» статйинчен: «В образе Нарспи воплощена огромная сила протеста против бесправия человеческой личности, против мертвящей силы старых традиций и рабской морали».

—11—

Сетнер ячĕ те авалхи тĕнпе çыхăннă халапран илсе пуçтарнă ятăн туйăнать. Авалхи грексен халапĕнче Сет — пуш хир тата ют çĕршывсен турри.

Вăл хăйпе пĕр tăван Осириса вĕлерет. Осирис — вилекен тата чĕрĕлсе тăракан çутçанталăк турри, вилнĕ çынсен шăпине татса параканни. Унăн арăмĕ Исида (Иштар) Çĕр пуянлăхĕн, шывсен, çилсен, юмăçсен турри тата пĕрлешнĕ мăшăрсен арлă-арăмлă хутшăнăвĕн тасалăхне, хĕрарăмри амăшлĕх туйăмне, вилнисене хӳтĕлекен Ама-турă. Исидăна авалхи грексем мăйракаллă ĕне евĕр сăнарланă. «Нарспире» ĕне çинчен асăнни пур:

Ав, унта хитре хĕрсем
Ĕни хыççăн чупаççĕ,
Чее, маттур каччăсем
Вĕсем хыççăн юлмаççĕ, —

текен йĕркесем, чăваш ĕне тытнине, ăна лайăх пăхнине палăртать. Ĕне тытман кил ялта сахал пулнă. Каçа хирĕç чее, маттур каччăсем хитре хĕрсене йĕрлесе çӳреççĕ. Чее тени хăех мĕне тăрать!

Осириспа Исида ывăлĕ Гор (Хор) — Хĕвел турри. Ăна авалхи тĕнре кăйкăр кайăк евĕр е кайăк пуçлă çын евĕрлĕ сăнарланă. Хĕвеле К. Иванов хăйĕн поэминче 32 хут асăннă. Данте те Хĕвеле час-часах аса илнĕ вырăнсем пур. Чăвашсем ывăлне — ылтăнпа, хĕрне кĕмĕлпе танлаштараççĕ: Хĕвел — ылтăн, Уйăх кĕмĕл сапать, епле тачă çыхăнура тăраççĕ Çĕрпе Тĕнче уçлăхĕ.

Хĕвел анчĕ, каç пулчĕ,
Чăваш çынни çывăрать.
Хĕвел тухрĕ, çуталчĕ,
Чăваш ĕçе тытăнать
Анчах пирĕн Нарспишĕн
Ĕмĕрлĕхе каç пулчĕ.
Ĕмĕр тĕттĕм тупăкра
Хуйхи-суйхи татăлчĕ, —

йĕркесем Дантен «Тамăкĕнчи» йĕркесене вуланă май килнĕ ăнлав пек туйăнаççĕ.

...Уж час и больше как солнце явилось.
...И мы сейчас под южной гемисферой,
Напротив той, что сушь собой в час некий
Накрыла — и холм, где с великой верой
Человек чистый смежил свои веки.
... Когда здесь утро, вечер там, оно же,
Это подобье лестницы косматой,
Торчит, как прежде, — все одно и то же.

К. Иванов авалхи грексен халапĕсене вуламан тесе те, вуланă тесе те татса калама çук. Тĕнче литературине ăнланма-ăнкарма авалхи тĕнче халапĕсемпе паллашмаллах пулнă унăн. Леонардо да Винчи картинисене çав тери ăнăçлă куçарса ӳкерме пултарнине шута хурсан, çамрăк йĕкĕт аваллăхпа тарăннăн кăсăкланни витĕрех палăрать. Юлташĕсем, тăванĕсем вăл пĕрмаях кĕнеке вуланине, хут çине çыра-çыра илнине, халăх сăмахлăхне пухма юратнине аса илеççĕ.

Нарспи — таса чун. Вăл суйласа илнĕ каччă Сетнер ятлă пулнинче пĕлтерĕш пур: Нарспи шăпин синкерлĕ саманчĕсем Сетнерпе туслашса çылăха кĕме пуçланинчен тымарланса ӳсме тытăнаççĕ.

Сетнерсĕр пурнăç Нарспишĕн — пуш хир, тăван Силпире те, ют çĕрти Хушăлкара та. Чунчĕри Сетнер патне туртăннăран, ăна юратса пăрахса çылăхсем тунăран Нарспи мĕн поэма тăршшĕпех шар курать. Ун ăшĕнче Хĕвел хĕртсе хĕремеслентернĕ пуш хирти пек шăрăх çанталăк. Силпире ăшри çулăма пусарма, чун савнипе тĕл пулса калаçма çӳллĕ валакран шăнкăртатса юхакан çăлкуç пур, пурнăç пур. Хушăлкара ун тав-

ралла синкерлĕ инкеке туртса кĕрекен çулăм «çĕленĕсем» чашкăраççĕ. Юратăва хирĕç тăнă Курайманлăх çĕнтерсех пырать. Икĕ чипер чунăн чипер юратăвне хӳтĕлекен тупăнмасть.

Тăхтаман Нарспие пачах та юратмасть, юратнă пулсан хăйне май çавăрма, парăнтарма ăшă кăмăл тупатчĕ, çыпăçуллă, чăтăмлă пулатчĕ. Нарспи уншăн сутăн илнĕ хаклă япала, чунтан килĕштернĕ чун мар.

Сетнере вилесле хĕнесе пăрахнă ывăлне хĕрхенекен амăшĕ Тăхтамана ылханни пур. Ырă таса чунлă Сетнер хăйне хĕненине, Михетерпе карчăкки ăна тем те пĕр каласа хăртнине каçарма пултарнăран вĕсене вăрă-хурахран çăлма чупса кайса пуртă айне пулать. Сетнер те пысăк чăтăмлă, çутă кăмăллă этем. «Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен» тет поэт, этем вăйĕ — тепĕр этеме йăнăшсемшĕн каçарма пултарнинче. Усал Ырра пурпĕрех тĕплет. Усал ырă тăвас текенсене кураймасть, хирĕç тăракана Тамăка çапса антарать.

М.Я. Сироткинăн «Классик чувашской литературы» статйинчен: «Сетнер, также как и Нарспи, наделяется К. Ивановым всеми качествами человека, красивого и духовно, и физически. Образ его овеян любовным отношением к нему поэта. Он рисует его сильным и гордым».

—12—

Сетнер Нарспие Хушăлкари ватă пуянран çăлма хатĕррине пĕлтерет:

...Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вăйлă аллăм пур,
Анчах, ăна пĕтерсен,

Унран усал тĕнче пур.
Хăвăн кăмăлу пулсан
Лашам çине лартăттăм,
Аяккаллах ку ялтан
Вĕçĕттĕм те кайăттăм, —

тет канăçне çухатнă çамрăк. Сетнер шухăшĕсем Данте поэминче çапларах янăраççĕ:

...Меж тем и вам я мысль свою открою:
Лишь только б совесть ведала покой,
А я готов идти на брань с судьбою.
Уже не нов задаток мне такой,
Так пусть же рок вращает шар заветный,
Как вздумает, а пахарь — заступ свой!

Тăхтаманран тарса хăтăлма Нарспи Сетнертен пулăшу ыйтать. Нарспи, хĕр пуçĕпе, хăйĕн юратăвĕ çинчен савнă каччине уçăмлăн, именмесĕр пĕлтерет. Вĕсем Çĕр çине пĕр-пĕринпе тĕл пулма килнĕрен, вĕсене чун туртăмĕ çывăхлатса пĕрлештернĕрен.

«...Мĕн тăвар-ха, кала-ха,
Мĕнле пирĕн май тупас,
Сетнер, Сетнер, кала-ха,
Ăçта каяс, мĕн тăвас?
Сана тем пек юратса
Савса эпĕ пурăнтăм», —

темелĕх питĕ хытă юратмалла, шанмалла.

Сетнер, хăйĕнпе тарма хатĕр Нарспие çăлма килĕшет. Анчах та вăл икĕ вăйлă аллипе тăшмана пĕтерсен те, çав тăшманран вăйлăраххи — усал тĕнче пурринчен шикленни сисĕнет. Ырă Хаярпа Усал Хаяр хушшинче пыракан икĕ хирĕçтăруллă Тĕнче вăрçин пĕр пĕчĕк саманчĕн çапăçăвĕ пуçланать. Пĕр-пĕрне чунтан юратакан хĕрпе каччă ваттисем пил памасăр, хăйсен ирĕ-

кĕпе пĕрлешни, урăххине çураçнă хĕр ашшĕпе амăшне намăс кăтартни — каçарми çылăха кĕни. Çураçнă хĕре вăрласа каякан та каçарми çылăхлă. Йăла-йĕркене, килĕшет-и-килĕшмест-и, пăхăнмалла, ашшĕпе амăшĕн сăмахĕнчен тухма юрамасть. Нарспипе Сетнер вăрмана тарни — ашшĕ-амăшĕн ятне яни, çирĕпленнĕ халăх йăли-йĕркине пăсни. Пăснин сăлтавĕ — икĕ чуна пĕрлешме ирĕк паманни, икĕ чуна пĕр-пĕринчен тăпăлтарса туртса уйăрни.

К. Иванов тăлмачă «Псалтырь», «Новый завет» кĕнекесен куçарăвне хутшăннăран, Моисейĕн «Пятикнижие» кĕнекине куçарма пуçăннăран Турă саккунĕсен сĕмне пуçа хывнах ĕнтĕ. Джон Уайт çырса кăларнă «Эрос оскверненный» ятлă кĕнекери йĕркесене палăртас килет: «В книге Бытия говорится о том, как мужчины «брали» женщин «в брак». Договор заключался в присутствии свидетеля и в соответствии с местными обычиями. Библия никогда не говорит о браке как о неком таинстве... Брак христиан ничем не отличается от брака язычников. Брак, подобно солнцу и дождю, дается Богом равно всем людям». ....В Ветхом завете мужчине, соблазнившему девственницу, дважды дается указание жениться на ней и оплатить за нее приданое (Исх. 22:16-17; Втор. 22:28-29) Если мужчина и девушка непомолвленными вступают в сношение, то вина возлагается на мужчину. Интересно, что во Второзаконии специально упоминается словосочетание «застанут их». Не в том смысле, что весь грех — в огласке содеянного или что соблазн, оставшийся в тайне, менее безнравствен. В обоих случаях девушка оказывается публично осрамленной».

Данте хайлавӗнче вӑрман — Ҫӑтмах, урхамах — Вӑхӑт. Урхамах-Вӑхӑт ҫине утланса аякка тарса кайса вӑрман-Ҫӑтмах ӑшӗнче ҫӑлӑнӑҫ шырани — ултавлӑ тӗпӗртетӳ. Вӑхӑтран тарса кайма май ҫук. Ҫылӑха кӗрекенсем валли Ҫӑтмахра вырӑн ҫук пулин те, К. Иванов вӑрманӗ-ҫӑтмахӗ икӗ айӑпсӑр айӑплӑ чуна пӗр каҫлӑх канлӗ хӳтлӗх парать. Юратакансем — телейлӗ, вӗсем пӗрлешнӗ вырӑн Ҫӑтмахра. Таса юратӑвӑн таса «линкка-линкка авкаланӑвӗ» вӑрманта-ҫӑтмахра пулса иртни — символлӑ пулӑм.

Сетнерпе Нарспие вӑрманта епле тытнине, яла илсе килсен епле хӗненине К. Иванов Дантен ҫакӑ йӗркисенче курма пултарнӑ:

...Но услыхали шум в лесу дремучем,
Как на облаве внемлет зверолов,
Что мчится вепрь и вслед за ним борзые,
И слышит хруст растоптанных кустов.
И вот бегут, левее нас, нагие,
Истерзанные двое, меж ветвей,
Ломая грудью заросли тугие.
...А сзади лес был полон черных сук,
Голодных и бегущих без оглядки,
Как гончие, когда их спустят вдруг.
В упавшего, всей силой жадной хватки,
Они впились зубами на лету
И растащили бедные остатки.

Данте йӗркисене К. Иванов йӗркисемпе танлаштаратпӑр:

...Виҫ юланут вӑрманта
Йӗр йӗрлесе ҫӳреҫҫӗ.
Пӗри кунта, леш унта,
Темӗнле йӗр йӗрлеҫҫӗ.
...Нарспи тӗлӗк тӗлленет:

Ашшĕ йытă пулнă та
Шăлĕсемпе шаккаса
Сиксе çӳрет вăрманта:
«Ăçта тартăн, усал хĕр?
Пуçна çийĕп тупăнсан!»
Йытă ури айĕнче
Шатăртатать сĕм вăрман.

Тăван килĕнче мĕн кĕтет икĕ çамрăка?

...Карчăк вĕçсе тухрĕ те
Çӳçрен ячрĕ Нарспине,
Старик чупса пычĕ те
Чышкă пачĕ Сетнерне.
...Картишĕнче çын нумай —
Туйне курма килнĕ пек.
Хура тăпра çийĕнче
Выртать Сетнер вилнĕ пек.
Амăшĕ те çавăнтах
Тăрать йĕрсе, ылханса,
Ярать ăнсăр ывăлне
Икĕ çынна йăттарса.

Дантен «Тасалу» пайĕнчи çак йĕркесем К. Иванов чунне тивнех пуль:

Дале — то трудно мне выразить в слове —
Толпа швыряла в юношу каменья
С яростным, зверским криком:
«Крови, крови!»
А он, снося без ропота мученья,
Уж пал на землю в истоме предсмертной,
Но к горним высям воссылал моленья
Неколебимо, искренне, усердно —
Чтобы к злодеям, перед ним виновным,
Простив, склонилось небо милосердно.

—13—

«Нарспи» поэмăри Нарспи Тăхтамана вĕлернĕ усал ĕçĕн тупсăмне ăнкарма пулăшакан чи пысăк пĕлтерĕшлĕ сăнар — чипер ача Сентти сăнарĕ. Нарспи асапне тарăнрах палăртма, усал ĕç тума шухăш тытнин сăлтавне çирĕплетме поэта Сентти сăнарĕ кирлĕ пулнă. Кĕвенте утланса çĕмĕрттерсе çӳрекен ача ятне те икĕ ятран пуçтарнă теме пулать: Сетнер тата Нарспи. Пĕр ят пуçламăшĕпе тепĕр ят вĕçĕнчи сас паллисене вырăнта хăварса, пĕрремĕш ят варринчи н-т сас паллисене вырăнпа куçарса лартса шутласа кăларнă Сентти ята икĕ ят çупăрлать. Сетнере ача чухне Силпи халăхĕ ун амăшĕ пек ачашшăн Сентти тесе чĕнме пултарнă. Апла-и, апла мар-и, К. Иванов Хушăлкари Тăхтаман тăванĕн ывăлне Сентти ят пани ахальтен мар. Ун ячĕ — вăрттăн символлă ят. Нарспи чун-чĕре суранне Сенттипе калаçса сиплет:

...Чипер ача Сентти пур,
Чупса килет лашипе,
Хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
Пакăлтатать инкĕшпе.
...Çĕнĕ çын та Нарспи кин
Пĕрмаях вăл хуйхăрать,
Сенттипе çеç калаçса
Хăй хуйхине пусарать.

Чăваш чунлĕ çичĕ çулти Сентти вулакан умне виçĕ хут тухать. Пĕрремĕш хут «Çимĕк иртсен» пайра. 9-мĕш пайăн 3-мĕш сыпăкĕнче Сентти ятне пилĕк хут асăнни — çамрăк хĕрарăмра ача амăшĕн туйăмĕ çуралнин сисĕмĕ — вată юман айĕнче пулса иртнĕ савăшу. Вăл та хăй ачипе выляма ĕмĕтленсе Сенттие ачашлать. Иккĕмĕш хут

«Нарспи ĕçĕ» пайра. 10-мĕш пайăн 5-мĕш сыпăкĕнче пĕр хут асăнни — Нарспи хăйĕн ăшĕнче аталанакан çĕнĕ чуна çăлса хăварас тĕллевпе пĕр шухăш çинче чарăнни. Пуçĕнче усал шухăш хускалнă, чунĕ вĕркет, чĕри çунать, куçĕ йĕрет. Сентти инкĕшне урипе тапса илет, унăн выляс килет. Нарспи ку хутĕнче Сенттие асăрхамасть. Вăл хăйĕн «Сенттийĕ» çинчен шухăшлать. Мĕншĕн тесен тулта — телей, пӳртре — асап:

...Тулта тĕнче хĕпĕртет,
Тулта тĕнче ялтăрать.

Çутçанталăк та Нарспипе Сетнерĕн пулас пепкишĕн савăнать. Ма тесессĕн Нарспи амаланнă савăшу саманчĕ тулта, вăрманта, пулса иртет. Çавăнпа та:

...Нарспи пӳртĕнче йĕрет,
Унăн чĕри çурăлать.

Хăй ирĕкĕпе пĕрлешнĕ Сетнерпе пĕр пӳртре пурăнас килни, савман упăшкипе пĕр пӳртре пурăнма тивни ăна «Качча пачĕç ирĕксĕр» шухăша пилĕк хут калаттарать, вăл тепĕр пилĕк хут ашшĕпе амăшĕн ăссăрлăхĕ «ырлăха мар, хурлăха» пулнине çирĕплетет.

«...Арăм пултăм ирĕксĕр
Атте-анне хушнипе,
Анчах хĕрĕр, мĕскĕнĕр,
Ырă курмасть каччипе.
... Мĕншĕн мана савнинчен
Çаплах ятăр уйăрса?
Мĕншĕн кунта киличчен
Çимерĕм-ши хам пуçа?
Мĕншĕн хаяр тăшманпа
Ман пĕр çуртра пурăнас?

Пӗтес мар-ши пуҫӑмпа?
Епле тӳссе пурӑнас?!» —

йӗрет вӑл маларах, каярах усал ӗҫне тума унӑн пусӗнче усал шухӑш тӗпленет:

...Ҫук, пуҫӑма ҫийиччен
Тӑшманӑма пӗтерем,
Асапланса тӳсиччен
Тӑхтамана... вӗлерем.
...Пӗтсен пӗтем, пӗт, тӑшман, —
Пурӑнӑҫӑм ырах мар.
Наркӑмӑшӑм, эс паян
Хӑвӑн ӗҫне туса пар.

Нарспи — Сетнерпе вӑрмана-Ҫӑтмаха тарса кайса «ҫылӑха» кӗнӗ Таса Юратуллӑ Чун. Таса Чуна варалама укҫа парса ирӗк илнӗ Тӑхтаман аллинчи саламат Нарспие кунсеренех ӑшалать. Ют ҫын хӗнени уншӑн темех мар. Автор ҫавна пӗлсе тӑрса ҫакӑн пек ӑнлантару парать.

«Хӗне, хӗне, Тӑхтаман,
Чунне кӑлар унӑнне!
Асаплантар, Тӑхтаман,
Хурсам йытӑ вырӑнне!
Хӗне, хӗне, Тӑхтаман,
Санран ҫамрӑк ан пултӑр!
Асаплантар, Тӑхтаман,
Нарспи часрахватӑлтӑр!
Анчах кайран хӑвӑнах
Ӳкӗнмелле ан пултӑр.
...Иртсе кайрӗ виҫ эрне
Ҫимӗк эрни хыҫӗнчен,
Ват упӑшка хӗснине
Нарспи тӳсрӗ ҫавӑнччен.
Анчах тепӗр эрнинче,
Пӗрре уяр ырӑ каҫ...

(Чим-ха, кӑна калама
Вӑхӑтсӑрах юрамасть).

Тапӑннӑ тӑшманран хӳтӗленмелле! Тӑхтаман хӗнесе вӗлериччен унран хӑтӑлмалла, тӑшмана хӑйне тӗп тумалла.

Ашшӗпе амӑшӗ ирӗксӗрлесе ӑна тӑшмана панӑран, Тӑхтаман ирӗксӗрлесе арӑм тунӑран (тен, арӑм тӑвайманран ислетнӗ саламачӗпе?), Нарспи те хӑйне мӑшкӑллакан тӑшмана пӗтерме хӑйне хӑй ирӗк парать. Тӑшманран хӳтӗленмелле! Тарни те, Тӑхтамана вӗлерни те — ҫӑлӑнӑҫ шырани, хӳтӗленӳ. Унӑн хӑйӗн юратӑвне хӳтӗлемелле! Мӗнле хакла кайса ларать ӑна ашшӗ-амӑшӗн, Тӑхтаманӑн чунсӑрлӑхӗнчен хӳтӗленме хӑтланни...

Сенттие виҫҫӗмӗш хут кӑтартнӑ чухне — Нарспи Хушӑлкаран тухса тарнӑ. Унӑн пуҫӗнче Тӑхтаман йахӗн Сенттийӗ ҫук. Ун пуҫӗнче — хӑй ӑшӗнчи «таса Сенттие» сыхласа хӑварасси.

«Эрос оскверненный» кӗнекерен: «...ничто не может быть лушей средой для рождения детей, чем место, где существует стабильная любовь их родителей. Деторождение - закономерный результат любви. ... Секс — это физическая близость, которая используется для построения прочных отношений двух людей, чья плоть становится единой, ...страстное желание познать и быть познанным, любить и быть любимым».

—14—

Михетер ячӗ те ӑнсӑртран тупӑннӑ ят мар. Михетер ячӗ михӗ сӑмаха ҫывӑх. Вӑл мул миххине тултарас ӗмӗтпе анчах пурӑнать. Унӑн телейӗ — пуянлӑх, укҫа. Ҫавӑ ҫеҫ. Ҫакӑн пирки Нарспи кулянса макӑрнине аван пӗлетпӗр:

«Атте-анне, анваскăр,
Тата пĕр çул тăрăр-ха,
Пĕртен-пĕрех хĕрĕре
Тата пĕр çул усрăр-ха».
Атте-анне ӳсĕрпе
Хĕрне итлес темерĕ,
Каччи пуян тенипе
Хĕрĕн чунне пĕлмерĕ.

Пĕртен-пĕр хĕрне ватă пуяна качча пани вĕсемшĕн — телей. Епле кĕтĕт ял халăхĕ икĕ пуян туйне! Епле мухтанать Михетер хăйĕн пуянлăхĕпе, пуян хĕрĕпе!

Михетер хăйне «ĕмĕр курман намăс» кăтартнă хĕрне ӳкĕтлесе те, ятласа та Сетнерĕн хура пӳртĕнчен тăван килне тавăрса тепре сутса яма хатĕр. Сетнере кĕрӳ туни ăна усă памасть. Сетнер Михетерĕн мул миххине нимĕн те хураймасть. Сетнер вĕсемшĕн — пуян хĕрне хапсăнакан «йытă, кĕççе пит», Нарспи пуçне çинĕ шуйттан.

«Атя, хĕрĕм, таврăнар
Шăтăк-шатăк ку пӳртрен.
Тепĕр каччă тупăпăр
Яту çĕрсех кайиччен.
Атя, Нарспи, ан хуйхăр:
Санăн аçу пур вĕт-ха.
Яту пĕтнĕ пулсан та,
Аçун мулĕ пур вĕт-ха», —

тенинче ашшĕ хĕрне каçарса тепĕр пуянпа тепĕр пурнăç тума пулăшма хатĕрри илтĕнет. Каллех — мул малта. Мĕскĕн чуна ырăпа пулăшас шутпа мар, ячĕ пĕтнĕ хĕрне мул çăлма пултарасса шанса киле таврăнма ятла-ятла ӳкĕтлет. Ашшĕ хĕрне усал сунмасть, вăл ăна ыр тăвасшăн. Хăй пуянлăхне вăл вăрласа мар, ĕçлесе тунă, хĕрĕн те-

лейлĕ пуласлăхĕ çинчен ĕмĕтленсе пурăннă. Поэт ăна ырă Михетер тесе сăнарлани, пĕр енчен илсен, — йăнăшах та мар. Анчах та Михетер чунтан юратса курман пулмалла, çавăнпа та хĕрĕн юратăвне ăнланма пултараймасть.

Сетнер килне пырсан карчăкки хăй упăшкине çĕлен пек чашкăрса тăван хĕрне ятлама хĕтĕртсе тăман тăк Нарспипе Сетнер пурнăçĕ лайăх еннелле улшăнма та пултарнă пулĕччĕ. Амăшĕ ырă суннă пулсан ашшĕн чунĕ те çемçелĕччĕ-и, тен. Çук çав, сĕрепсĕр карчăк чĕлхи çĕлен сăнни пек, хăй çуратнă хĕрне ылханса «ухмах», «çĕр çăтман пуç», «усал», «йытă» сăмахсемпе сăхать. Юлашкинчен тата упăшкине тăван хĕрĕ çине сурма хушать. Михетер чĕлхинче çынлăх, шеллев паллисем пур пулсан, карчăк чĕлхинче пĕр ăшă, ырă сăмах та çук. Вăл та юратса курман. Юратмасăр çуратнă хĕрне шеллеме, ачашласа хĕрхенме, ăнланса, юратса ырă тума ун чунĕ — пушă. Михетерпе карчăккине ашшĕамăшĕ авалтан тĕпленнĕ йăла-йĕркепе пĕрлештернĕ. Йăли-йĕрки чун туртăвмне мар, мул хулăнăшне пăхăнать.

«...Эсир мана ÿстертĕр,
Ача чухне юратрăр,
Анчах ÿссе çитрĕм те,
Хĕрĕр чунне курмарăр.
...Ача чухне хĕрĕре
Юрататпăр теттĕрччĕ,
Савнă хĕрĕр мĕн ыйтнă —
Ăна пурте хатĕрччĕ», —

тесе Нарспи телейлĕ ачалăхне аса илни Дантен «Тамăкри» Франческăн: «Нет большего мученья, как о поре счастливой вспоминать в несчастии»

каларăшне аса илтерет. Нарспин ăшă асаилĕвĕсене сивĕ асаилĕвĕсем витсе пыраççĕ пулин те вăл ашшĕпе амăшĕн чунĕсем ăшăнасса, ăна тĕрĕс ăнланасса шаннине-кĕтнине палăртать, ÿпкелеме те хăять:

«...Мĕншĕн çапла ху хĕрне
Парса ятăн кашкăра?
Саншăн çав пур ырăлăх
Мĕнпурĕ те укçара...
Эпĕ асап курнишĕн
Ху айăплă, эпĕ мар.
Сетнер кĕрÿ пулмасан
Эпĕ сирĕн хĕрĕр мар.
Ах, аттеçĕм, аннеçĕм,
Сетнерпеле пехиллĕр».

Нарспи Турă умĕнче кĕлтунă пек тархасласа йăлăнни ашшĕпе амăшĕн чунне тивмеççĕ, хăлхине кĕмеççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем, чунсăр çын кĕлеткисем евĕр, — иккĕшĕ те сивĕ, чĕрĕ виле.

М.Я. Сироткинăн «Классик чувашской литературы» статйинчен: «Богатство и деньги, в представлении Михедера, — основа всей жизни. Сила их заглушает в Михедере все родительские чувства. Богатый Тахтаман — лучший жених для его любимой дочери, хотя тот стар и безобразен. В сравнении с Тахтаманом, красота и сила, ум и талант бедняка Сетнера для Михедера — ничто. Даже получив резкую отповедь и решительный отказ Нарспи вернуться домой, Михедер не теряет веры в чудодейственную, на его взгляд, силу денег, которая вынудит в конце концов Нарспи покориться».

Нарспи ашшĕ-амăшне тархасласа ыйтнине,

чунсӑр Михетерпе карчӑккин айӑпне пула хӗрӗн суранӗсем тарӑнланнине, Сетнер пуртӑ айне пулнӑ сӑлтавсен синкерне К. Иванов Дантен ҫакӑн пек йӗркисенче тупма пултарнӑ:

...Но посмотри: вот, окаймив откос,
Течет поток кровавый, сожигая
Тех, кто насилье ближнему нанес,
О гнев безумный, о корысть слепая,
Вы мучите наш краткий век земной
И в вечности томите, истязая.

—15—

Дантен «Камитӗнче» Михетерпе карчӑккин ҫыпҫӑнса ларнӑ кӳлепине К. Иванов ҫак йӗркесенче курнӑ, тен:

...Из двух голов, двух туловищ двойное
Чудище мерзко ваялось единым,
В первом лице уж виделось второе.

Срослась рук пара с двухлапьем змеиным,
А бедра, ноги, и живот, и груди —
Тем стали, что не зрелось николи нам.

Весь прежний облик померк в этой мути,
Ничто и двое двигалось... -лись... тихо,
Сложившись в образ небывалой жути.

Ҫавӑнтах Нарспипе пӗрле вилнӗ, ҫуралма пултарайман ачи, Михетерпе карчӑккин выҫлӑхне пула ҫут тӗнчене килеймен мӑнукӗ, ҫӗлен чӗппи пулса тӑнӑскер, тӑватӑ вилӗне Тамӑкра тапӑнса сӑхни ҫинчен те пӗлме пулать:

Как ящерица в разгар солнцепыха,
Подобно молньи, от плетня чрез дверцу
Пересекает дороженьку лихо,

На двух других, к их животу, не к сердцу —
Бросился вихрем гаденький змееныш
Иссиня-черный, словно шарик перцу,

И в место, коим связан эмбрион наш
С питательной средой, змей ужалил
Того, кто ближе — и назад, а он уж,

Укушенный, лишь молча рот оскалил,
Зевнув, то ли сонный, то ли в лихоманке,
И отупелый взгляд на змея пялил,

Тот — на него, из нутряной изнанки
Дым испуская, такой же струится,
Мешаясь с ним, у грешника из ранки.

«Нарспире» кун çинчен калани çук, пулма та пултараймасть. Халăх сăмахлăхĕнче «хырăм пăрахнă ача амăшĕ вилсен ун патне çĕлен пулса шуса пырса кăкăрне ĕмет, сăхать» тени Данте «Тамăкĕнче» курăннă юмах çеç мар. Хуп-хура çĕлен чĕппи пулса тăнă ача хăйне çуралма паман тăванĕсене кашнинех сике-сике сăхать. К. Ивановшăн вăрманта савăшнă икĕ çамрăкăн ача юлнине палăртмалли тĕслĕх пулса тăнă теме те юрать. Пурте айăплă!

К. Иванов Нарспи амăшне ят паманни — çав хĕрарăм чунсăр этем кĕлетки вырăнĕнче кăна пулнине пĕлтерет. Вăл — усал вăйсен чури, ырă Михетере усаллатса пурăнакан путсĕр мĕлке.

М.Я. Сироткинăн «Классик чувашской литературы» статйинчен: «Образы Тахтамана, деспота и ревнивца, человека черствой души; матери Нарспи, во всем потакающей самодуру-мужу; знахаря-йомзи, проповедующие покорность и подчинение злому року, дополняют картину бессерде-

чия нравов в мире, кумиром которого являются деньги, усиливают впечатление жестокости отношений в семейном быту чувашских богатеев».

Сетнер амӑшӗн ячӗ ҫукки — икӗ хӗрарӑма икӗ хирӗҫле ӑнлавлӑ хак памалли меслет. Ывӑлне пӗччен ӳстерекен хӗрарӑм шӑпи ҫӑмӑл мар, вӗсем чухӑн пурӑнаҫҫӗ. Чухӑн ҫын — ҫук ҫын мар. Сетнерӗн урхамах пек лаши пур. Урхамах пек пулма лашана лайӑх пӑхмалла, утӑ ҫеҫ мар, сӗлӗ те ҫитермелле. Лаша хӑй ҫине утланса ларнӑ вӑйпитти хӗрпе каччӑна вӑрманалла ҫил пек вӗҫтерсе каять. Ҫав тери начар пурӑнман вӗсем, Сетнерпе амӑшӗ. Хайсене пурӑнма кӑна мар, юмӑҫа каймалӑх саппас та пур Сетнер амӑшӗн, япӑх пурӑнман вӗсем.

Ҫамрӑк мӑшӑра апатлантарма кӳрше кивҫене кайни те ӗнентерӳллӗ мар. Такам хушнипе поэмӑна кӗртсе хунӑ тӗрӗсмарлӑх пек туйӑнать. Поэмӑна тӳрлетекене социаллӑ драма кирлӗ пулнӑ: пуян хӗре — пуяна памалла, чухӑнӑн айккинче тӑмалла. Пуянсемпе чухӑнсен хушшинчи синкерлӗ танмарлӑх куҫа тирӗнсе тӑмалла. Суту-илӳ тӑвакан хутшӑнура — чунсӑрлӑх:

«Атя, йытӑ, хӑвӑртрах,
Пӗртте мана пӑхмастӑн.
Сетнер, йытӑ, кӗҫҫе пит,
Пуян хӗрне ан хапсӑн»,
«Ав-ав хӗрӳ мӗн калать —
Сетнер, шуйттан, илӗртнӗ.
И-и, Михетер, каяр-ха,
Хӗрӳ ҫине сур ӗнтӗ!» —

Амӑшӗ пӗртен-пӗр хӗрне ылханнинче мӗн тери хаяр курайманлӑх!

Суккӑр юмӑҫ старик те ятсӑр. М.В. Иванова-

Максимова асаилĕвĕнче çакна асăрхарăм: «Пĕчĕк-кĕ чухне чирĕнчен сыватас тесе аттесем пичче-не тĕрлĕ тухтăрсем патне илсе çӳренĕ. ...Сыватас тесе юмăç карчăк патне те кайса пăхнă. Лешĕ пус-ма ларакан юлашки хура пусса чӳклеттерчĕ тет. Пичче пурпĕр сывалайман. Вара анне юмăçа тек вăрçатчĕ». Юмăç сăмахĕ — тĕшмĕш, авалхи тĕн сĕрĕмĕ.

Лăпкăн, ăшшăн калаçакан Сетнер амăшне çăпатине саплама чарăнса юмăç пăхса янă кăвак çӳçлĕ старик Сетнер çамрăклах çĕре кĕрессе пĕлтернинче ăна асамлă вăй пулăшнине палăртнă самант пур:

«...Халичченех çынсене
Юмăç пăхса параттăм,
Суя сăмах суяса
Улталаса яраттăм.
Мĕнле вара ку паян,
Чĕре чăнах пĕлчĕ-шим?
Суйса парас тенĕччĕ,
Ак тамаша! Тĕрĕс-шим?»

Юмăçăн пĕчĕкçеççĕ хура пӳрчĕн ăшне уçса хунă алăк çеç çутатать, паян вара «Хĕвел çуттин пайăрки урай тăрăх ав шăвать». Пуринчен ытла тĕлĕнмелли! —

Акă хĕвел çуттийĕ
Шуса-шуса пычĕ те
Сиксе ларчĕ старикĕн
Кăвак çӳçлĕ пуç çине.
...Хĕвелĕ те выляса
Çутатать çӳç пĕрчине.

Сетнер амăшĕ çитиччен юмăç патне Хĕвел пынă, унăн çӳçне çеç мар, пуçне çутатма пынă вăл. Сетнерпе малалла мĕн пуласса пĕлтерме пынă.

Сетнер епле ҫын пулнине вулакана юмăҫ пĕлтерет:

«Панă ăна пӳлĕхҫĕ
Вĕри юнпа ҫемҫе чун.
Пӳрнĕ ăна пӳлĕхҫĕ
Кĕске ĕмĕр, йывăр кун.
Сивĕ кунсем килĕҫ те,
Шăнса кайĕ вĕри юн.
Хытă кунсем килĕҫ те,
Хытса кайĕ ҫемҫе чун.
Вĕри кунсем килĕҫ те,
Вĕриленĕ шăннă юн,
Хытнă ҫĕртен ирĕлсе
Ҫунса кайĕ ҫемҫе чун».

Вĕри юнĕ шăнни, ҫемҫе чунĕ хытни — чун савнийĕпе ирĕксĕр уйăрни; шăннă юн вĕриленни — Нарспи ун патне таврăнни; ҫемҫе чунĕ ҫунса кайни — Михетерпе карчăккине вăрăсенчен ҫăлма кайсан хурах пуртти айне пулни. Хăйне вăрҫса-хăртса, тĕп пулма ылханса хăварнă Михетерпе карчăкки патне Сетнер каймасан та пултарнă. Чунĕ ҫемҫе пулнипе юратнă мăшăрĕн ашшĕпе амăшне каҫарнă вăл, инкекрен ҫăлма чупса кайнă. Сетнер наян мар, ĕҫчен пулнине ҫирĕплетекен йĕркесене палăртас килет:

Карчăк (Михетере):

Вăрҫсам ĕнтĕ хытăрах,
Пăсăрлантар Сетнерне:
Ĕҫре хытнă аллипе
Ан хапсăнтăр ҫын хĕрне!

Усал тăшмана ĕҫре хытнă ҫирĕп алпа ҫĕнме ҫук иккен, усалсен аллинче усал ĕҫ тумалли ĕҫ хатĕрĕ нумай. Тăхтаманăн Нарспие куллен-кунах хĕнеме саламат пур; вăрă-хурахсен Сетнере

вĕлерме пуртă пур, Нарспин усал ĕç тума — наркăмăш пур. Икĕ чун юратăвне хӳтĕлеме пултаракан вăй тупăнманни хурлантарать. Тĕнчере (Силпире) Тамăк вăййи алхасать, пурне те Тамăка тĕртсе яма, Турă-Юратăва хирĕç çылăх хыççăн çылăх тутарать.

Ывăлĕн синкерлĕ шăпишĕн кулянса ӳкнипе тайăлса ларакан карчăка юмăç малалла ăнлантарса панинче — Турă çырни, çӳлти вăйсем пӳрни:

Тĕрлĕ усал-тĕсел мар,
Киремете хывни мар,
Чир-чĕр ертен йĕрĕх мар,
Çын тухатса хуни мар,
Çук, кин, санăн ывăлна
Турă çырни çаплалла.
Ан йĕр, кинĕм, пӳлĕхçе
Епле хирĕç пымалла?

Сетнер вилĕмне К. Иванов Дантен çакăн пек йĕркисенче асăрхаса хăйне кирлĕ пек — урăхларах усă курма пултарнă:

Передо мной, стеня, идет Али,
Ему весь череп надвое рассажен.
И все, кто здесь, и рядом, и вдали, —
Виновны были в распрях и раздорах
Среди живых, и вот их рассекли.
Там сзади дьявол, с яростью во взорах,
Калечит нас и не дает пройти,
Кладя под лезвие все тот же ворох
На повороте скорбного пути.

«Тамăкра» тертленекен юмăççене Данте тарăхса питлени çапларах:

...А этот тощий, подобье скелета —
Микеле Скотто, пройдоха сугубый,

В магии дошлый — один на полсвета.
...Этот — Бонатти, а этот — Беззубый:
Ему бы в руки кожу, шило с дратвой,
Да поздно править свой промысел любый.
Этих колдуний да отметит взгляд твой:
Не пряли и не шили мастерицы,
А занимались волжбой и заклятвой.

Чăваш хушшинчи юмăçсемпе тухатмăшсенчен ытларахăшĕ — карчăксем, К. Ивановăн юмăçĕ — çăпата сапласа ларакан, ĕç тăвакан старик. «Ему бы в руки кожу, шило с дратвой, да поздно править свой промысел любый» тенинче, паллах, — юмăçласа пурăннăшăн çылăха кĕнипе вилсен вăл Тамăкра çунасси. Суккăр старик Сетнер амăшне юмăç пăхса яма тӳлевсĕр мар, мăшăр чăлхапа пĕр кĕпе, укçа парсан кăна килĕшет. К. Иванов ăна выçăх пулнăшăн тăрăхласа сăнарлать:

Çине кĕрĕк тăхăнса
Çĕлĕк тытрĕ хул айне.
Ура айне шăрт хурса
Укçа хучĕ ун умне.
Унтан шурă сухалне,
Кăвак çӳçне якатса
Укçа çине суккăрскер
Пăхрĕ куçне чакăртса.

Ватă çынна та укçа çылăха кĕртет. Укçа паракана улталаса ярасси уншăн — хăнăхса çитнĕ, тупăш паракан суя ĕç. Сетнер шăпине витĕр курма ăна хĕвел пайăрки (Çӳл тӳпе) пулăшнă теме пулать. Данте «Тамăкне» те хутран-ситрен хĕвел пайăрки йăлтăртаттарса илет:

...А долог путь наш дальнейший и труден.
Уж час и больше, как солнце явилось.

Данте «Çӑтмахри» Хӗвел çинчен çырнине те пӗлтерес килет. Данте, хӑйне вулакана та шахвӑртса илет:

...А ну, читатель, где твои конспекты?
Вникай в премудрость, сок познанья сладок,
Пока к ученью волю не пресек ты!
Тебе кажу, что есть миропорядок:
Как я, будь сыт им — тем, о чем пишу я,
И не споткнись, коль будет слог негладок.
Натуры первым слугой назову я
Светило, мощью движимо небесной...

Чӑваш халӑх сӑмахлӑхне, юмӑç чӗлхин тӗслӗхӗсене тӗрлӗ ялсенче пухса çӳренӗ поэт Нарспие юмӑçлама вӗрентет. Наркӑмӑшӗ, паллах, хӑйӗн ӗçне тӑватех, анчах та Нарспие усал ӗç тума пулӑшакан усал пайтах:

«Çитмӗл тинӗс леш енчен
Килет карчӑк Шапатан,
Вӗр, сур, карчӑк, яшкана, —
Пӗттӗр усал Тӑхтаман!
Утмӑл тинӗс уттинче
Ларать, сикет йӗс пукан,
Сикех, сикех, йӗс пукан, —
Пӗттӗр усал Тӑхтаман!
Вӑтӑр та пӗр ту çинче
Йӗс хуранра пиç, яшка,
Çав яшкара пиç, çӗлен,
Пиç тамӑкра, упӑшка!» —

Вилӗм яшки кил вучахӗнче мар, вӑтӑр та пӗр ту çинче пиçет иккен, ӑна Нарспи мар, çитмӗл тинӗс леш енчен килнӗ карчӑк пӗçерет иккен... Усал вӑйсем Нарспие пур енчен те хупӑрласа илнӗ, вӑл та тамӑкран хӑтӑлаймӗ. Унӑн хӗр чух-

нехи таса чунне варалама-хуратма тытнӑ тӗллев пурнӑҫа кӗрсе пырать. Усала вӗреннӗ тухатмӑшсем Усал хушнӑ ӗҫне тӑваҫҫӗ. Этеме усал-тӗселтен юмлакан-тасатакан юмӑҫсен хӑйӗн чӗлхи пур, вӗсене Турӑ, Хӗвел пулӑшать. Усал вӑйсен те хӑйсен ӗҫне тума вӗрӳ-суру чӗлхи пур, вӗсене ҫӗр анлӑшӗ-тӑршшӗпе вырнаҫнӑ усалсем вӗрсе-сурса пулӑшса, пуҫӑннӑ ӗҫе вӗҫлеме хӗтӗртсе тӑраҫҫӗ. Ырри те, хурри те Сӑмах (чӗлхе) шайӗнчи асамлӑ вӑйпа хӑватлӑ. Нарспи наркӑмӑшлӑ яшка пӗҫернӗ вӑхӑтра «ҫӗлене» Нарспи виҫӗ хут асӑнать.

Вӗрет, сурать сарӑ кин,
Хӑй яшкине пӑтратса.
Хуран айӗ ҫӗлен пек,
Ҫунать вучӗ явӑнса:
«...Вӑтӑр та пӗр ту ҫинче
Йӗс хуранра пиҫ, яшка.
Ҫав яшкара пиҫ, ҫӗлен,
Пиҫ тамӑкра, упӑшка!»
Вӗрет, сурать сарӑ кин,
Хӑй яшкине пӑтратса.
Вилӗм яшки вӗрет-ҫке,
Ҫӗлен пекех чашлатса.

Дантен «Тамӑкӗнчи» ҫӗлен те хӑрушӑ:

«Вот лютый змий с хвостом остроконечным,
Дробящий сталь и твердость стен и скал!
Вот он весь мир зловоньем губит вечным!».
...Он хвост крутил в пространстве,
мглой покрытом,
Как скорпион, вращая острием,
Вооруженным жалом ядовитым.

—16—

Хушăлкари Тăхтаман çуртĕнче çапăçу пырать. Тăхтаманăн çемье телейĕсĕр пуçне ытти-хытти пурте пур. Çамрăк, хитре арăм ăна телей памасть. Çемье чăмăртанаймасть. Телей вăл — чунпа чĕре киленĕçĕ-савăнăçĕ. Чун туртман çын патне ӳт туртăнмасть. Нарспипе Сетнере пĕрлешме çутçанталăк пилленĕ. Вĕсем — пĕр-пĕрне чунтан-вартан юратакан мăшăр. Чунтан — Турăран, вартан — арпа амана пĕрлештерекен килĕшӳллĕ çыхăну-туртăм туйăмĕ çыпăçтарса пĕр-пĕрин çумне туртса çыхса лартнăран. Нарспин юратман çынран хӳтĕленсе хăйĕн тасалăхне упрас килет, хăйне ют çынпа варалас килмест. Тăхтаманăн хăйĕн пуянлăхне парса хăварма арăмне ача çураттармалла, унăн та ача ашшĕ пулса курас килет. Чаплă туй туса укçа тăкнă хыççăн чипер арăмне хĕне-хĕне арăм тăвас хĕрӳлĕхĕ ăна тинкерен кăларать. Нарспи хăй ирĕкĕпе парăнманран вăл ăна саламатпа ислетет. Чурăс чунĕ курайманлăхпа, кĕвĕçӳпе тулса ларать. Латсăр еккине Нарспие юратнипе мар, ачашласа илĕртнипе мар, хĕненипе çырлахтарать. Мĕншĕн тесен ун чунĕнче юрату çук.

Тăхтаман та телейсĕр. Мĕн тери чăтăмсăррăн кĕтнĕ вăл Нарспипе иккĕшне кĕлете хĕве хупасса:

«...Ĕнер Силпи ялĕнчен
Туйĕ килчĕ таврăнса,
Паян кĕрӳ хĕр туйне
Кĕтет хĕрӳ туй туса.
...Тĕрлĕ апат айĕнче
Çăка сĕтел авăнать,
Ӳсĕр кĕрӳ пуçĕнче
Тĕнче вăр-вăр çаврăнать.
...Кĕрӳ çинчи шур кĕпен

Арки вăр-вăр тăвать-çке,
Туя кĕтсе ват пуçăн
Чунĕ вăр-вăр тăвать-çке.

Хĕве хупасса чăтăмсăррăн кĕтнипе «шур кĕпен арки вăр-вăр тăвать-çке», çав сăлтавпах «чунĕ вăр-вăр тăвать-çке». Анчах та хĕве хупсан Нарспи Тăхтамана яхăнне яманнине авторăн çак йĕркисенчен чухлатпăр:

«Асту, Нарспи, йĕвенӳ
Ман алăра малашне! —
Терĕ хытах Тăхтаман
Чăтаймасăр çиллине. —
Туйна анчах ăсатам,
Унтан мана пĕлĕн-çке.
Мĕн пуласне пĕлме çук —
Ху курасне курăн-çке!»

Сетнер çак вăхăтра мĕн тăвать? Вăл Хушăлкана вĕçтерсе çитнĕ, эпир ăна Нарспипе Тăхтамана çăрапа питĕрсе илнĕ кĕлет çумĕнче куратпăр.

...Акă каччă, пĕр каччă
Кĕлет тавра явăнать.
Те итлеме, те пăхма
Пушă вырăн вăл шырать.
Тăват-пилĕк ача-пăча
Явăнаççĕ çавăнтах:
Ай, намăссăр ача-пăча
Мĕн кирлиех пур унта?
... Ачи-пăчи çавăнтах
Ашшĕ килне чупаççĕ.
Илтни çинчен çав хутрах
Ялта сăмах сараççĕ.
Илтен-тăран сар каччă
Вăрманалла уттарчĕ,
Хăлха илтнĕ сăмаха

Хăй ăшĕнче пытарчĕ.
Кĕрен-тухан ялти çын
Каччă çине пăхмарĕ.
Юман анчах вăрманта
Хăй кӳршине систерчĕ:
Çав вăрмана кĕнĕ çын
Пирĕн тăван Сетнерччĕ.

Лашине вăл юманран кăкарса хăварнă ĕнтĕ.

«Эрос оскверненный» ятлă кĕнекерен: «Тело же не для блуда, но для Господа, и Господь для тела», — говорит апостол Павел (1 Кор. 6:13) Бог создал нас так, чтобы мы через тело учились интимности личностных отношений. Тело не предназначено для извлечения из сексуальных отношений только удовольствия, без всякой ответственности перед партнером».

Чун тухиччен хĕнenине чăтма хăнăхĕччĕ, тен, Нарспи, анчах та унăн Тăхтаман килĕнче юлас килмест. Сетнер арăмĕ Сетнертен ача кĕтет. Çак пулăма çирĕплетнĕ йĕркесем:

Иртсе кайрĕ виç эрне
Çимĕк эрни хыçĕнчен,
Ват упăшка хĕснине
Нарспи тӳсрĕ çавăнччен.
Анчах тепĕр эрнинче,
Пĕрре уяр ырă каç...

Нарспи — вĕрӳ-суру кĕллипе тухатса пĕçернĕ наркăмăшлă яшка çитерсе Тăхтамана вĕлерне каça К. Иванов «уяр ырă каç» тени шухăшлаттарать. Нарспи пуçĕнчен пĕр самантлăха та тухса ӳкме пултарайман вĕри шухăш — Сетнертен çие юлни. Çимĕк каçĕ хыççăн виçĕ эрне иртсен, тепĕр эрнинче, «уйăх хушши» килменрен Сетнертен хырăм юлни паллă пулать.

Тăхтаман «куллен-кунах саламатпа кастарнă-ран» хырăм ӳкме пултарасси хăратать. Тăхтамана парăнсан ачи унран тесе улталама пулĕ, анчах суйи çиеле тухатех. Силписем Нарспи Сетнерпе вăрмана тарни çинчен Тăхтамана килне килсех элеклесе кăтартнă. Çуратсан та ачипе амăшĕн Тăхтаман килĕнче йĕркеллĕ пурнăç пулас çук. Чи йывăрри — Сетнере иккĕшĕн ачине Тăхтаман ачи тесе улталама пултараяс çукки.

Нарспи хăй пуçне хăй çиес, вилес шухăш пăра-лать. Хăй вилес тĕк çуралас ачи те унпа пĕрле ви-лет, ăна вĕлерес килмест. Пĕртен-пĕр çăлăнăç — Тăхтамана тĕп туса Хушăлкаран Силпие, савнă Сетнерĕн килне пырасси, ачине çуратса тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстересси. Пулас ача амăшĕн усал ĕç тумах тивет. Хăй ирсĕр ĕç тунине Нарспи чунпа туять, асапланать. Усал куçне çавăрса, чăмăрне кăтартса яшка çиме чĕнекен Тăхтамана вăл çапла калать:

— Çийĕп-çке-ха кайран та,
Пит çиессĕмех килмест. —
Ах, Нарспийĕ çавăнтах
Тухса каять, тӳсеймест.
Тулта ларать куççульне
Тăпра çине юхтарса.

Ырă чунлă Нарспи Тăхтамана вĕлерме тивнĕшĕн ăна хĕрхеннипе юхтарать пулĕ куççульне. К. Иванов Тăхтамана шеллени витĕмлĕ палăрать. Нарспи ашшĕпе амăшĕ хăйĕн çамрăк хĕрне ватă пуяна укçашăн качча паман пулсан Тăхтаман шăпи сарăмсăррăн татăлман пулĕччĕ:

Пĕтрĕ пĕр чун тĕнчере,
Ĕçĕсемшĕн хупланчĕ.
Пĕтрĕ чăваш ĕмĕрĕ,

Унӑн чӗри лӑпланчӗ.
...Пӗтрӗ чӑваш ӗмӗрӗ,
Вырӑн ҫинчен тӑрас ҫук,
Выҫӑ выльӑх-чӗрлӗхне
Тӑрса апат парас ҫук.
Выҫӑ ака лашисем
Кӗҫенеҫҫӗ картара.
Анчах эсир, тӑлӑхсем,
Курассӑр ҫук хуҫӑра.

Пурӑн та пурӑн ӗнтӗ йӗркеллӗн ӗҫлесе, савӑнса. Пӗр чун пӗтрӗ тет, ҫын темест, ӗмӗрӗ ӗҫӗсемшӗн хупланчӗ тет поэт поэма вӑрттӑнлӑхӗн чатӑрне уҫа-уҫа... Ҫут тӗнчене килнӗ чунсен ҫылӑхлӑ ҫулне-йӗрне, ӗҫне-хӗлне тӗплӗн йӗрлет вунҫичӗ ҫулти тӗпчевҫӗ-философ.

—17—

Арҫын туйне ӑсатма пӗтӗм Силпи пухӑнсан туй лашисем аслӑ масар тӗлӗнче чарӑнни те вӑрттӑн пӗлтерӗшлӗ. Михетерпе карчӑкки ваттисене асӑнса, ӑшӑ куҫҫуль тӑкса Нарспие пиллени, чирлӗ Сетнер чун савнине куҫӗпе шырани, Нарспи ӑна курса макӑрса яни... Икӗ чун пӗр-пӗринсӗр пурӑнма пултарайманни Сетнер шухӑшӗнчен паллӑ:

«Эх, пурӑнӑҫ, пурӑнӑҫ!
Вилме анчах юлчӗ ҫав.
Эх, пурӑнӑҫ, Нарспи те
Ҫичӗ юта кайрӗ ҫав.
Унсӑр пуҫне мӗн тӑвас
Ӑрӑскалсӑр пуҫӑмпа,
Ӑҫта кайса кӗрес-ха
Хамӑн усал хуйхӑмпа?»

Поэт Турӑ умӗнче каҫарма ҫук ҫылӑха кӗнӗ Нарспие мӗлкепе танлаштарни Данте «Тамӑкӗн-

че» асапланакансен мĕлкине асилтерет. Нарспи сăнарĕ мĕлке шайне ӳкнĕ, унăн чунĕн тамăкран хăтăлма çăлăнăç çук. Уйăх çутинче курăнакан мĕлкепе кăна танлаштарни — ытла та пĕчĕк:

...Уйăх кукри ярănса
Тухрĕ вăрман хыçĕнчен.
Шăппăн-шăппăн çеç утса
Тухрĕ Нарспи пӳртĕнчен.
Кайрĕ мĕлке пек шуса
Анкартисем хыçнелле.
Ялтан тухрĕ ыткăнса,
Чупрĕ вăрман ăшнелле.

Малтан шăп тăракан, каярах урса кашлакан сĕм вăрман Нарспи чунне хăратать:

Армак-чармак йывăççем
Пуçĕсемпе сулаççĕ,
Нарспи иртсе пынă чух
Çулне пӳлсе тăраççĕ.
Ват йывăççем хушшинче
Арçурисем выляççĕ,
Нарспи иртсе пынă чух
Аллисене тăсаççĕ.
Сасартăках çил тухса
Асрĕ кайрĕ сĕм вăрман.
Йĕри-тавра ахăрать:
«Тыт арăмна, Тăхтаман!»

Тăхтамана вĕлерсе Нарспие çăлма Хушăлкана çул тытнă мĕскĕн Сетнерĕн чунне те хăратать вăрман:

...Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
Тамăкри пек ахăрать.
Те арçури, те шуйттан
Çав териех ашкăнать.

Тискер вăрман хăрушлăхне К. Иванов Дантен çак йĕркисенче вуласа сĕмленнĕ теме пулать:

Еще кентавр не пересек потока,
Как мы вступили в одичалый лес,
Где ни тропы не находило око.
Там бурых листьв сумрачен навес,
Там вьется в узел каждый сук ползущий,
Там нет плодов и яд в шипах древес.
Такой унылой и дремучей пущи
От Чечины и до Корнета нет,
Приют зверью пустынному дающей.

Сетнер ăшĕ çуннине пусарса вăрман шавне хуплас пек юрланă юрăра Нарспи хӳхлевĕнчи шухăш янăрать:

...Çуралтăм-мĕн аннерен
Хĕн-хур асап курма çеç.
Çав асапран, хĕнлĕхрен
Çамрăк пуçăм пĕтни çеç.

Сетнер юррине вăйлă тăвăл йĕрсе, ахăрса таçта çитиех вĕçтерет:

...Çав юрăри куççульсем
Пĕр чун патне çитеççĕ.
Таçтан-таçтан аякран
Тепри хирĕç макăрать,
Усал асап-хуйхăран
Унта тепĕр чун çунать.

Малалла вара темĕнле пăтрашу пурри сисĕнет. Поэмăри Сетнер юррин иккĕмĕш çаврăмĕ Нарспи юрри пек туйăнать. Сетнер сасси ун хăлхине кĕнине поэт çӳлерех хывнă йĕркесенче пĕлтернĕрен çак йĕркесем Нарспи йĕре-йĕре чупнă май хăйĕнпе хăй, вăрманпа калаçнăн илтĕнеççĕ:

«Хура вăрман, сĕм вăрман,
Мĕншĕн хытă шавлатăн,
Савни пекех юрласа
Вилнĕ чуна вăрататăн?
Тĕттĕм вăрман, сĕм вăрман,
Анултала тăлăха,
Савни пекех юрласа
Ан хăварсам хурлăха.
Аслă вăрман, сĕм вăрман,
Мана чăнне кала-ха!
Мĕскĕн чуна шеллесе
Чун савнине кăтарт-ха.

Икĕ сас, икĕ чун пĕр-пĕрин ытамне васкаççĕ. Поэт ăнлавĕнче çутçанталăк этем пекех — чĕрĕ, сисĕмлĕ, туйăмлă, вичкĕн куçлă-пуçлă Хăват. Уй — куçлă, вăрман — хăлхаллă тесе ахальтен каламан халăх. Тамăк усалĕсем тапăннă тĕнчере тĕрлĕ асар-писер алхасать. Анчах та тĕнчене çутатма, ăшăтма каллех Хĕвел тухать.

⟵18⟶

Нарспипе Сетнер иккĕшĕ те хăйсем çылăха кĕнине ăнланаççĕ. Вĕсен юратăвĕ хăйсемшĕн — телей, ыттисемшĕн, ял халăхĕшĕн — намăссăрлăх, çылăх. Ашшĕ-амăш ирĕкĕнчен тухни, мĕн авалтан çирĕпленнĕ йăла-йĕркене пăсма тивни, çылăха нимĕнпе те каçарттарма май çукки Нарспипе Сетнершĕн — пысăк хуйăх.

Савнине хӳтĕлеме, Тăхтаман пусмăрĕнчен çăлма Хушăлкана талпăннă Сетнер еплерех хуçăлать:

«Ах, çылăхлă пуçăма
Ăçта чиксе хурам-ши,
Ах, çылăхлă чунăма
Епле тытса чарам-ши?» —

тесе асапланать вăл. Çавă «уяр ырă каç» Тăхтамана пĕтерме çула тухнă Сетнерпе, Тăхтамана пĕтернĕ Нарспи тĕлпулăвĕ каллех вăрманта пулса иртет. Çутçанталăкшăн вĕсен юратăвĕ — çылăх мар, пурнăç саккунĕ:

Икĕ савни пĕрлешсен
Пуçне тайрĕ ват юман.
Пĕр-ик тапхăр çил вĕрсен
Шăп лăпланчĕ сĕм вăрман.
Хура пĕлĕт саланса
Пĕтрĕ вăрман хыçĕнче.
Хĕвел пăхать шăратса,
Кайăк юрлать йăвинче.
Курăк çинчи сывлăма
Хĕвел парать ăшшине.
Икĕ чуна савăшма
Хĕвел парать çуттине.
Ялтăртатать ырă кун,
Усал кунăн мĕн ĕç пур?
Савăнса утать икĕ чун
Çичĕ ютăн мĕн ĕç пур?

Çак йĕркесенче çутçанталăк этеме телей курма панă юратуллă пурнăç илемĕн симфонийĕ янăрать. Икĕ савакан чуна пĕтĕм тавралăх, Хĕвел саламлать. К. Иванов хăй те кĕтнĕ тĕлпулушăн хĕпĕртесе юман хыçĕнче йăл-л кулса тăнăн туйăнать. Çакă илемлĕ самант поэмăра Çăтмахăн йăлтăртатса илет. Савăшни (чăваш чĕлхинче) — арçынпа хĕрарăм арлă-варлă пулса пĕрлешнине пĕлтерекен ăнлав. Çакă ирĕке вĕсене Хĕвел парать, пĕрле пулма вĕсене çутçанталăк пиллет.

Джон Уайт çырса кăларнă «Эрос оскверненный» ятлă кĕнекери йĕркесене палăртас килет: «Нашим первым шагом должна быть благодар-

ность любящему Создателю за то, что мы испытываем половое влечение. Не только физический аспект секса, но и наслаждение, получаемое от него, предопределены Господом. Наше тело обладает восприимчивостью к ласкам, потому что Бог создал его таким. Наслаждение, — однажды подчеркнул С. Льюис (английский историк и литературовед),— есть изобретение Божье, а не дьявольское».

Анчах та пусахлама пуçланă усал çумрах, «хура кайăкăн чăйлатса» Тăхтаман чунĕ Нарспи чунне шыранипе хăратать. Икĕ чуна пĕрлештернĕ вăрман сăнарĕ вĕсем тĕлпуличчен сĕре хăрушăччĕ. Ку — икĕ чун асапне ăнлантармалли витĕмлĕ мел. Нарспие кĕтсе илнĕ вăрман шăппăн тăрать пулсан та армак-чармак йывăçсемпе сехрене хăпартать. Унтан сасартăк çил тухнипе вăрман хăрушла ахăрма пуçлать.

Йывăçсем хушшипе ыткăнса пыракан Сетнере те хăратать сĕм вăрман. Вăл Хушăлкана усал шухăшпа вирхĕнет: Нарспие мăшкăлтан хăтарма Тăхтамана пĕтерес шухăшпа. Ырă ĕç тума усал ĕç тумаллине ăнланнă Вăрман та урать. Сетнер чунне тăрмалакан шухăшсем тăвăл пек тапхăрăн-тапхăрăн киле-киле пуçран çапаççĕ, ун çиллине хăпартаççĕ:

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.
Кутсăр-пуççăр çил тухсан
Чарăнассăн туйăнмасть.
...Тапхăр-тапхăр çил килет
Пăлтăр-палтăр çавăрса.
Тĕттĕм вăрман ÿхĕрет
Çĕре çитех авăнса.
Хура пĕлĕт пĕрмаях

Шăвать вăрман тăрринче.
Ярать çиçĕм çĕр çурсах
Хура пĕлĕт хушшинче.
Аçа çапать, шартлатать,
Пĕтĕм тĕнче кисренет.
Çумăр çырма пек юхать,
Лупашкасенче кĕрлет.

Сетнер юрринчи шухăшсенчен чи çивĕччисем — «Нарспи» поэмăн пĕлтерĕшне тĕрĕс ăнланма пулăшаканнисем:

...Çамрăк пуçăм пĕтмĕччĕ,
Мулăм çукки пĕтерчĕ.
Вăл та пулин юрĕччĕ,
Çын ухмаххи пĕтерчĕ.
Çын ухмаххи юрĕччĕ,
Усал тăшман тупăнчĕ.
Усал тăшман пĕтĕччĕ,
Турă çырни курăнчĕ».

Мĕн-ха ĕнтĕ Турă çырни? Сетнер ăнланма ăнтăлакан шухăша Дантен «Тасалу» пайĕнче вулама пулать:

«Всему причиной зрите неотвратной
Одно лишь небо, будто все на свете
Вершится силой его необьятной.
Будь это так, то была бы в запрете
Свобода воли и не смог никто бы
Ни за добро, ни за зло быть в ответе.
Небо нас движет — то вопрос особый.
Не скажу — всех, но ведь всем свет дарован,
Могла меж злом и добром выбрать чтобы
Свобода воли — ей же уготован
Удел победы в воинственной буре,
Коль выбор благ и с небом согласован.
Вы мощной силе и благой натуре

Подчинены всем вашим разуменьем,
Но не верховной небесной лазури.
И если мир ваш предан заблужденьям,
То вы причиной, с вас и спрос суровый.
И ты проникнись сим верным сужденьям...»

Вăрман шавĕнче ик чĕрери «вăйлă тăвăллă, хуйхăллă сасăсем чуна çурса йĕреççĕ», икĕ «усал-асап хуйхăран» макăракан чунсем вăрман сукмакĕпе талкăнса утса-чупса тĕл пулма ăнтăлаççĕ.

К. Иванов Данте поэмин сĕм вăрманĕнчи хура кайăксене курса хăйĕн курăмне анлăлатса пуç-тарма çак йĕркесемпе усă курнăн туйăнать:

Там гнезда гарпий, их поганый след,
Тех, что троян, закинутых кочевьем,
Прогнали со Строфад предвестьем бед.
С широкими крылами, с ликом девьим,
Когтистые, с пернатым животом,
Они тоскливо кличут по деревьям.

—19—

«Нарспи» поэмăн чи синкерлĕ пайĕсенчен пĕри — «Атте-анне» (13-мĕш пай). Вăл сыпăксене пайланмасть. Унта — Сетнерпе амăшĕн пĕчĕк пӳртĕнче Нарспипе ун ашшĕ-амăшĕ хушшинче пулса иртнĕ калаçу-спектакль. Ăна Автор пуçлать, калаçăва-ятлаçăва итлесе ларать те вĕççăмах хушса калать. Сетнер амăшĕ кӳршĕрен турăх кайса илнĕ, сĕтел çине çăкăр-тăвар кăларса хунă, апатланаççĕ:

Апатланса икĕ чун
Хĕрӳ сăмах калаçать.
Ватă карчăк-амăшĕ
Шăппăн итлесе ларать.
Асăнаççĕ ĕлĕкхи

Ырă, лăпкă пурнăçне,
Каçхи вăйă-улаха,
Çимĕксенчи кунсене.

Çав вăхăтра Михетерпе карчăкки Сетнер килне Нарспие шыраса пыраççĕ. Михетерпе карчăккин сăн-сăпачĕ вĕсем каланă сăмахсенче ярıех уçăлать. Хăйсене намăс кăтартнăшăн Михетер хĕрне ятлать пулсан та, пĕрре хăратса, тепре йăлăнса киле таврăнма ӳкĕтлени илтĕнет:

«Эх, хĕр, хĕ-ĕр, хĕр-и эс?!
Нарспи, мĕскер хăтлантăн?
Епле çынсен умĕнче
Çак намăса кăтартрăн?
...Турра шĕкĕр, халиччен
Усал сăмах илтменччĕ,
Çак тарана çитиччен
Киремет те тивменччĕ.
Манăн килĕм-çуртăма
Ырă пирĕшти пăхатчĕ,
Ырă пирĕшти пăхнипе
Ялта ятăм кайманччĕ.
Пӳлĕх, хăрпан, çут тĕнче
Мана савса тăратчĕç,
Кăвак хуппи, çут хĕвел
Мана тупăш паратчĕç.
Çак тарана çитрĕм те,
Ватă пуçăм усăнчĕ.
Эсĕ çапла пулнипе
Ырă кунăм пăсăлчĕ», —

тет кулянса ӳкнĕ Михетер. Хăйĕнпе хăй, хĕрĕ илтмелле калаçни Нарспи чунне тивессе шанать. Ача чухнехи савăнăçлă самантсене аса илтерсе Нарспи чунне çемçетме тăрăшать:

«Мĕн кĕçĕнран ӳстертĕм,
Хĕр кăмăлне татмарăм.
Савнă хĕршĕн пуянлăх
Кунĕн-çĕрĕн пуçтартăм.
Кăнтăрла та, çĕрле те
Канлĕ ыйхă курмарăм.
Хĕрĕмшĕнех тăрăшса
Куçăмсене хупмарăм.
Епле качча парăп-ши
Тесе ялан шутларăм,
Хĕр телейĕшĕн тăрăшса
Пуян каччă шырарăм.
Качча патăм, туй турăм.
Паян акă мĕн çитрĕ!
Манăн ватă пуçăма
Паян акă мĕн çирĕ!
...Пĕр Сетнершĕн тăктартăн
Аçу-аннӳн шур çӳçне,
Пулăшмарĕ пуянлăх,
Пулăшмарĕ сăмах та».

Ашшĕ хĕрне ӳпкелесе сăмахланинче кăшкăрашса ятлаçни мар, мĕн пулса иртни çинчен шухăшла-шухăшла асапланни курăнать. Амăшĕ вара намăс сăмахсемпе касать-хирет-хĕнет, ун нимĕнле ырă асилӳ те çук, хĕрне хăртасси кăна. Нарспи те ача чухнехине ырăпа асилет. Анчах та ашшĕпе амăшне ăна лайăх пăхнин сăлтавне куçран калать:

«...Анчах эсир хĕрĕре
Ӳстерессе ӳстертĕр,
Ӳстертĕр те — укçашăн
Сутса ярса пĕтертĕр.
...Эпĕ асап курнишĕн
Ху айăплă, эпĕ мар.

Сетнер кӗрӳ пулмасан
Эпӗ сирӗн хӗрӗр мар.
Эй, аттеҫӗм, аннеҫӗм,
Сетнерпеле пехиллӗр —
Ҫавӑн чухне тин вара
Ӗмӗр пӗрле пулӑпӑр».

Укҫа серепине ҫакланнӑ икӗ ватӑшӑн хӗрӗ тархасласа ыйтни ниме те тӑмасть. Вӗсен хӗрне тепӗр качча сутса ярса тепӗр хут укҫа тумалла. Нарспие киле тавӑрма май ҫуккишӗн тарӑхса ылханаҫҫӗ, хӑйсен пуянлӑхӗ хӗрне киле таврӑнма пулӑшаймасса ӑнланса ҫавӑншӑн Сетнере айӑплаҫҫӗ:

«Ы-ых, Сетнер, астӑвӑн:
Манӑн хӗре эс ҫирӗн!
Эсӗ, ҫавтер усал хӗр,
Хура пӳртрех тип эппин!
Аҫу килне, чим-халӗ,
Хӑвах чупса пырӑн-ха,
Аҫу мӗнле ыррине
Ҫавӑн чухне курӑн-ха!»

Намӑса пӗлмесӗр ашшӗ те ылханать, амӑшӗ те ылханать ҫамрӑк мӑшӑра. Ҫакӑн пек вӗҫленет часах тӑвата виле пулса выртас ҫывӑх ҫынсен пурнӑҫӗнчи юлашки калаҫӑвӗ. Автор сӑмахӗнчи пӗтӗмлетӳре — ӑнлантару:

Тухса кайрӗҫ ылханса
Ашшӗ-амӑш хӑй хӗрне.
Урам тӑрӑх карчӑкӗ
Ҫаптарать хӑй сӑмахне.
Намӑсланса, хӗрелсе
Хӗвел анчӗ, пытанчӗ.
Сетнер амӑш ахлатса
Сӗтел ҫине пуҫтарчӗ.

Икĕ чунсăр этемĕн ирсĕрлĕхĕнчен хĕвел те намăсланать, хĕрелсе пытанать. Михетерпе карчăккишĕн текех хĕвел тухаймĕ, вĕсем хăйсен пурнăçĕнчи юлашки кунне путсĕр ĕçпе вĕçлеççĕ. Дантен «Тасалу» пайĕнчи çакăн пек йĕркесем К. Иванов куçне тăраннах ĕнтĕ:

В грехах потерян дар златого века,
В грехе умолк так горько и прискорбно
Шум вольных игрищ, сладостного смеха.

—20—

«Намăсне çухатнă», мăшкăл тӳснĕ, хăйĕн тăшманне вĕлернĕ хĕрарăм пуçĕ çине хуйхă хыççăн хуйхă йăтăнать, юлашкинчен çапсах антарать. Чун йăпатмăш Сетнерне, Михетерпе карчăккине вĕлернĕ хурахсем пуртăпа çапса пăрахсан Нарспи çакăнса вилет.

«Тамăкĕ» вĕçленсе пынă май Дантене пĕр пулăм курăнать:

...Гекуба, в горе, в бедствии, в плену,
Увидев Поликсену умерщвленной,
А там, где море бьет волну,
Труп Полидора, страшно искаженный,
Залаяла, как пес, от боли взвыв:
Не устоял рассудок потрясенный.

Чăваш поэчĕ Итали поэчĕн курăмне «Нарспире» çапларах кăтартать:

...Михетерпе карчăкне
Иккĕшне те вĕлернĕ!
Çичĕ тарçи-тĕрçине
Эрех парса ӳсĕртнĕ.
Сетнер чупса пынă-мĕн

Илтсе карчăк сассине,
Вăрă, шуйттан, пурттипе
Пуçнех çурнă унăнне!
...Кăтăр-кăтăр арман чулĕ
Чĕре çинче авăрать.
Арман чулĕ айĕнче
Мĕскĕн чĕре çурăлать.
Ах, çурăлса кайрĕ те,
Нарспи кайрĕ йăванса.
Тин ăн килсе кĕчĕ те,
Йĕрсе ячĕ кăшкăрса.

Нарспи хăй те, унăн чунĕ те «пĕтĕм тĕнче хушшинче» ытлашши пулнăран «йĕре-йĕре хуйхăрса» Кантăр варĕ еннелле утать.

Ялти çынсем шеллесе
Пăхса юлчĕç хыçĕнчен,
Паян пулнă ĕç çинчен
Пакăлтатрĕç тĕттĕмччен.
...Тепĕр кунне ирхине
Чăваш хире тухмарĕ,
Эрнекуна асăнса
Нимĕн ĕç те тумарĕ.

Хĕрсемпе каччăсем те урама тухса вăйă ирттерме хăйман, ватăсем вара

Тĕрлĕ çĕрте пухăнса
Ушкăн-ушкăн тăраççĕ,
Михетерĕн кил-çуртне
Сутма канаш тăваççĕ.

Виçĕ вилене пытарсан, тăваттăмăш вилле шыраса тупса, Нарспие Кантăр варĕнчех хăй çакăннă йăмра айне пытараççĕ. Поэт трагедие çакăн пек хӳхлевпе вĕçлет:

«Çапла иртрĕ пурăнăç,
Пуçĕ пĕтрĕ çамрăклах,

Ашшĕ-амăш ухмахран
Пĕтрĕ хуйхă-суйхăпах.
Курчĕ çутă тĕнчене
Пӳлĕх-турă пӳрнипе,
Ӳсрĕ, пулчĕ сарă хĕр
Атте-анне пăхнипе.
Пӳлĕх-турран кăмăлĕ
Ăслă турĕ хăй хĕрне.
Атте-анне ирĕкĕ
Çирĕ сарă хĕр пуçне».

Малтан «ашшĕ-амăш» тени Нарспи шăпине тивет. Каярах, пĕтĕмлетӳ сăмахĕнче — поэт «атте-анне» тет, çуралнă ачан пурнăçĕ епле пулса тухасси ашшĕ-амăшĕнчен килнине асăрхаттарса калать.

К. Иванов «Нарспие» «Тăвată вилепе» мар, урăхларах та вĕçлеме пултарнă. Тĕслĕхрен: Михетер мулне çаратаççĕ, çуртне çунтарса яраççĕ, нимсĕр тăрса юлнă Михетерпе карчăкки Сетнер килне пурăнма куçаççĕ. Михетерпе карчăкки хăйсен йăнăшне ăнланса хĕрĕпе кĕрĕвне тав туса, çуралнă мăнукĕсемпе савăнса туслăн-мирлĕн пурнаççĕ. Çук çав, савăнăçлă вĕçленĕ пулсан поэма шăнăрĕ хуçăлатчĕ, шутламалăх сăлтав пулмастчĕ, кăшкăрулла ыйтусем хуравсăр юлатчĕç.

Хире-хирĕç вăйсем ăнсăртран пач! ишĕлсе аннă инкек «пулăшнипе» мирлешсе, килĕштерсе пурăнма пултараймаççĕ пулас. Купаланса тулнă çылăхсене каçарттарма вĕсен тамăка ăсанмалла. Поэмăна синкерлĕ вĕçлени — халăх сăмахлăхĕнчи юмăç чĕлхипе ылхан чĕлхин вăйĕсене тĕрĕслени. Юмăç калани — шăпа, Карчăкпа Михетер ылханĕ çитни — Çутă тĕнчере усал вăйсем пуç пулса тăни. Юмăç сăмахĕ:

«Çамки шăтăк — хупăнмĕ,
Чĕри шăтăк — сыпăнмĕ,
Пӳлĕх Турă пӳрнинчен
Нимĕнпе те иртеймĕ».

Карчăк ылханĕ:

«Пĕтĕр, типĕр çакăнта,
Типĕр хăрăк турат пек!
Шăмăр-шаккăр çĕриччен
Асапланăр йытă пек!»

Поэмăра тепĕр вăрттăн ылхан та пур. Вăрмантан тытса килсен амăшĕ Нарспие çӳçрен явса тытать, çыхса хунă Сетнере Михетер саламатпа ислетет.

Картишĕнче çын нумай —
Туйне курма килнĕ пек.
Хура тăпра çийĕнче
Выртать Сетнер вилнĕ пек.
Амăшĕ те çавăнтах
Тăрать йĕрсе, ылханса,
Ярать ăнсăр ывăлне
Икĕ çынна йăттарса.

Михетерпе карчăккине Сетнер амăшĕн ылханĕ çитнĕ теме те пулать. Мĕн каласа ылханнине пĕлместпĕр, анчах та ăнкарса илме йывăр мар. Çакă вăл — çутçанталăкăн тавăру саккунĕ пурнăçланни. Михетер мулĕ никама та телей памасть. Çавă мул пирки Нарспи асапĕ пуçланать, мула пулах пурин те вăхăтсăр çĕре кĕме тивет.

Нарспи йăмраран çакăнни те ăнсăртран мар. Йăмра — чăвашсен тăванлăх, пĕрлĕх йывăççи. Ашшĕпе амăшĕ тăван хĕрне тĕп тăваççĕ, çавăнпа та Михетер йăхĕ çĕр çинчен тĕппипе çухалать. Тăхтаман йăхĕ те турат ямасть, хăй те хуçăл-

са ӳкнӗ турат. Поэма пуҫламӑшӗнчи хӳхӗм Нарспи поэма вӗҫӗнче мӗскӗне тӑрса юлать:

Ашшӗ ҫирӗ хӑй хӗрнех,
Тӑван ҫирӗ тӑванах.

Поэмӑн юлашки сыпӑкӗнче К. Иванов Нарспие хӳтӗлес шухӑша ҫак йӗркесемпе туртса ҫыхать:

«...Пӳлӗх-туррӑн кӑмӑлӗ
Ӑслӑ турӗ хӑй хӗрне,
Атте-анне ирӗкӗ
Ҫирӗ сарӑ хӗр пуҫне».

Поэмӑн тӗп шухӑшӗ, ӑслӑ хӗрӗн ӑслӑ сӑмахӗнчи икӗ йӗркере вырнаҫнӑ:

Пуянлӑхра анчах мар,
Ыр курасси ҫыннинче...

—21—

«Нарспире» пуянсемпе чухӑнсен хушшинчи танмарлӑхпа ҫыхӑннӑ кӗрешӳ-ҫапӑҫу саманчӗсем пачах та ҫук. Поэмӑра — Ҫӗр ҫине килнӗ Чунӑн кӗске ҫул-йӗрне кӑтартса пани, кил-йыш, ҫемье тӗрекӗ-телейӗ таса юрату ҫинче тымарланса-шӑнӑрланса-туратланса-папкаланса тӑма кирлине астутарни.

Сетнер — чух пурӑнакан ҫын: пӳрчӗ пӗчӗк пулсан та, урхамах пек учӗ пур. Унӑн амӑшӗн — юмӑҫа памалӑх мӑшӑр чӑлхапа кӗпе, укҫа пур.

Михетерӗн ҫичӗ тарҫӑ пулнине поэма вӗҫӗнче пӗлтӗмӗр, анчах та вӑл ял халӑхне пусмӑрлани паллӑ мар. Ҫичӗ тарҫӑ пулнӑ-и, пулман-и, анчах та вӑл «пурттипеле каскаласа туй кӳмине» пӗчченех сиплет. Нарспи туйӗнче ҫур ял ҫӗр ҫӗмӗрсе ӗҫсе-ҫисе, юрласа-ташласа савӑнать. Поэт ӑна нумай ҫӗрте «ырӑ ҫын Михетер» тесе сӑнарлать.

И.Н. Ульянов ячĕллĕ чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ чухне В.П. Станьял «Тăхтаман лаша вăрри пулнăран пуйса кайнă» тесе каланине астăватăп. Слакпуçпа Хушăлкана тĕпчев экспедицийĕсене кайсан ялти ватăсем каласа кăтартнисене студентсене те пĕлтерме кирлине пĕлсе каланă сăмах шухăша ярать. Станьял пулипулми сăмах калас çук. К. Иванов та пĕлнĕ кун çинчен, тен, çырнă та. Поэмăран касса кăларнă сыпăксенче мĕн каланине пĕлместпĕр. Юрра ăста Нарспин пĕр юррине те хăварман. Алçырăвĕ-оригинал упранса юлнă пулсан шыраса тупнă пулăттăмăр.

Поэмăри пуян Тăхтаман уйри ĕçне, килти ĕçе хăех тăвать. Тарçă тытни паллă мар. «Нарспие» иртнĕ саманан социаллă танмарлăхне питлесесивлесе кăтартнă хайлав-халап вырăнне хунине авторăн пысăк тавракурăмлă ăс-тăнĕ, канăçсăр чунĕ хирĕç пулнă. Вăл çырнине такам пăсса, касса-ватса, кĕскетсе кăларнăшăн тарăхнипех вăл çĕнĕрен çырнисене пичете памасăр чăматанра пытарса упранă. Тăхтаман сăнарне Дантен «Тамăкĕнче» çапларах йĕркесенче курма пулать:

«...Лить кровь людскую был лихой вояка.
...Он здесь за то, что из большого стада
Похищена им не одна скотина,
Но с Геркулесом так шутить не надо:
Дубина сотней раз прошлась по вору,
Десятой кратой убив скотокрада».

К. Иванов, ял пурнăçне аван пĕлекенскер, халăхăн кулленхи пурнăçне тĕплĕн, çыпăçуллăн сăнарласа кăтартать. Михетер килĕнче мĕн пулса иртнине айккинчен пăхса тăрса сăмах-юмах тума юратакан халăх чĕлхи çивĕч пулни паллă. Нарс-

пие пуяна качча панăшăн ăмсанаççĕ, çураçнă хĕр Сетнерпе вăрмана тарни çинчен Силпирен Хушăлкана пырса Тăхтамана элеклесе кăтартаççĕ.

Поэмăа пурĕ пилĕк виле: Тăхтаман, Михетерпе карчăкки, Сетнер, Нарспи. Тăвата виле тăвата енлĕ çут тĕнчере Нарспи чунне тамăк кăтартаççĕ. Курайманлăхпа Юрату асапĕ çын чунне пĕрешкелех çунтарать. Çавăнпа та çĕр айĕнчи чăн тамăка малтан хăйсем ӳпĕнеççĕ, кайран Нарспие те туртса антараççĕ. Ят панă сăнарсенчен чĕрĕ-сывă юлни — чипер ача Сентти:

Çавтер ырă ачана
Турă чунне панă çав,
Кулса сиксе выляма
Кайăк чунĕ янă çав.
Çичĕ çулхи ачара
Чăваш чунĕ ларать çав.
Пĕчĕк кусĕ йĕрсен те
Йăваш тути кулать çав.

Мăнтарăн, унăн та, ачаранах куççуль витĕр кулма вĕренмелле-хăнăхмалла пулас... Нарспи те ача чухне, хĕр чухне кайăк сассиллĕ таса, чипер чун пулнă. Ырă ачан Сенттин малаллахи пурнăçĕ еплерех пуласси ашшĕ-амăш ирĕкĕнчен, юратăвĕнчен нумай килĕ...

Паллах, ытлă-çитлĕ пурăнмалăх мул кирлех. Анчах та мулшăн кăна пурăнни, мула пăхăнса чуна-çына ним вырăнне хуманни — леш тĕнчере тамăкра мăкăрланасси те, çутă тĕнчере тамăкри пек çунасси те... Ашшĕ-амăшĕн, Сетнерĕн виллисене курса хускалайми пулса ларнă, хаяр амак тытнăн йăванса кайнă Нарспи тăна кĕрсен кăшкăрса йĕрсе янинче — поэма пĕлтерĕшĕн пĕтĕмлетĕвĕ.

Нарспин юлашки хӳхлевӗнче — хуйхăпа ҫунса кăмрăкланнă чунӗ чашкăрса каланинче виҫӗ ыйтупа виҫӗ хурав кăшкăрать — ашшӗ-амăшне, турă-пӳлӗхҫе, хăйӗн чунне-пусне:

«Эй, аттеҫӗм, аннеҫӗм,
Мӗншӗн мана ҫуратрăр?
Тӗнче асапне курма
Кун ҫутине кăтартрăр.
Эй, турăҫăм-пӳлӗхҫӗм,
Мӗншӗн мана чун патăн?
Мӗскӗн ҫамрăк пуҫăма
Пӗр телей те ямарăн.
Эй, чунăмҫăм, ҫамрăк пуҫ,
Мӗншӗн капла пултăн-ши?
Пӗтӗм тӗнче хушшинче
Эсӗ пултăн ытлашши».

Чи ҫывăх тăванӗсен чăн-чăн юратăвӗ, тимлӗхӗ, хисеплӗхӗ ҫитменнипе пулса иртеҫҫӗ тӗнчери мӗнпур синкерлӗ пулăмсем. Н. Данилов К. Иванов амăшӗпе, Е.В. Ивановăпа, калаҫса ҫырса илнинчен: «Эпӗ хам Кайрăклăсем, Тетеҫлӳ Ваҫлей хӗрӗ пулнă. Ҫăварнире 24 ҫул тултарсан ҫимӗкре, 120 тенкӗ хулăмла ҫураҫса, мана Слакпуҫне Писсăр Ваҫинккине пачӗҫ. ... Кӗҫтенттин ҫамрăк чухнех питӗ йăваш ачаччӗ, урамра ачасемпе вылясах ҫӳреместчӗ. Картишӗнче ларатчӗ те тăмран ӗнесем, лашасем, сурăхсем туса аташатчӗ. Чӗмпӗрте вӗреннӗ чухне Кӗҫтенттин кашни ҫулах, кашни хӗл кăшт киле таврăнса пурăнатчӗ. Ун чух вăл хирти ӗҫе питех кайман. Час-часах Василий Григорьевич ятлă учитель патне ҫӳретчӗ. Хăш чухне вӗсем ун патӗнче ирчченех ларса ирттеретчӗҫ. ...Ман ӗҫе ҫăмăллатас тесе вăл мана ҫавăрса ҫу уҫламалли уйран ҫӳпҫи туса панăччӗ.

...Килте çынсем çук чухне урай çăвассинчен те именсе тăмастчĕ. ...Ӳссе çитĕнсен ĕнтĕ, кĕлетпе лаç хушшине йăлтах йывăçсем лартса тултарчĕ. ...Чирлесен Кĕçтенттин шавах чĕрĕлессе шанатчĕ. ...Вăл вилсен, йĕре-йĕре пулĕ çав, пĕтĕм шăлсем ӳксе пĕтрĕç. Сывлăхăм йăлтах начарланса юлчĕ. Ашшĕ те питĕ хуйхăрчĕ».

Кашни чуншăн Ырăпа Усал, Тамăкпа Çăтмах çапăçаççĕ, этем усала парăнса усалланса, чунсăрланса каять. Дантен «Тамăк» пайĕ «Тасалупа» «Çăтмах» пайĕсенчен вăрăмрах, Турă умĕнче тĕрлĕ сăлтава пула çылăха кĕнĕ чунсем чылайрах. Çавăнпа та пулĕ Силпи ялĕ те Çĕр çинчен çухалнă. Пелепей тăрăхĕнчи авалхи ялсен топографи карти çинче ӳкерĕнсе юлнă, историре чăннипех те сарăлса ларнă ял саланса кайнă, пĕтнĕ. Çакăнта та Çут тĕнче саккунĕсен вăрттăнлăхĕ пурах пулĕ...

Сетнер вăрманта мĕн çинчен юрланине вуласа пĕлетпĕр. Нарспи мĕн çинчен юрланине çырса паманнине авторăн тепĕр вăрттăнлăхĕ теме те юрать.

«...Атте-анне ирĕкĕ
Çирĕ сарă хĕр пуçне.
Выртрĕ хĕсĕк тупăка,
Ячĕ юлчĕ ял çинче.
Ун хурлăхлă юррисем
Юлчĕç çынсен асĕнче», —

тени Нарспи сăнарĕпе çеç çыхăнман пек туйăнать. Çак йĕркесенче К. Ивановăн «Нарспи» поэми те, хăйĕн ячĕ те — халăх асĕнче упранса юласса шанни мар-ши? Данте «Çăтмахĕнчи» пĕтĕмлетӳ йĕркисем çапла:

Если в грядущем поэмой сакральной,
Отпечатленной небом и землею,
Над чем я годы чах, разлучен какою
С милой овчарней, где дремал я агнцем

Назло волкам, мне грозившим войною, —
Вернусь осипшим, пусть седым уж старцем,
Зато поэтом — близ родной купели,
Где я крестился, увенчаться лаврцем...

Н.С. Сергеевăн «Поэтпа юнашар» асилĕвĕнчен: «И.Я. Яковлев вара ку поэма çинчен хĕрӳллĕнрех те ытларах тĕлĕнсе калаçатчĕ. «Астăвăр, Константин Иванов — талантлă поэт. Вăл — пирĕн шкул мухтавĕ. Вăл хăйĕн таланчĕпе пирĕн чăваш чĕлхин чапне çĕклерĕ, пирĕн чĕлхемĕр пуян та илемлĕ иккенне кăтартрĕ. Тăван халăха, тăван чĕлхене юратас пулать, ху чăваш пулнишĕн вăтанма кирлĕ мар», — тетчĕ Иван Яковлевич».

Данте «Тамăкĕ» 34 юрăран тăрать, Иванов поэми — 14 пайри 96 сыпăкран. Ашшĕпе амăшĕ тăван хĕрĕпе Сетнере хăртнă 13-мĕш пай сыпăкланмасть. «Нарспин» кашни сыпăкĕ — Силпи, Слакпуç çăлкуçĕсем евĕр хĕвел шевлин ытамĕнче кĕмĕл тенкĕн йăлтăртататать. Чĕнкĕлти кĕсле, Кĕçтентти калама юратнă сĕрме купăс сасси евĕр илемлĕ кĕвĕ-юрă пулса халăх асĕнче, ватти-вĕтти чĕринче пурăнать:

Халь те пулин Силпире
Асăнаççĕ мĕскĕне.
Ялан, çумăр çумасан,
Шыв сапаççĕ тăприне.

К.В. Иванов хăйĕн «Нарспине» Дантен «Божественная Комедия» поэмин сĕмĕпе калăпласа чăваш хайлавне тĕнчери ытти халăхсен литератури шайне çĕклес ĕмĕт-шухăшпа çырнă. Чăваш чĕлхи ытти халăх чĕлхисенчен нимĕнпе те кая маррине хăйĕн куçарăвĕсемпе çирĕплетнĕ. Данте «Тамăкĕн» вĕçĕнче çакăн пек йĕркесем пурри тĕлĕнтерет:

Место одно есть, укромно, в сторонке
От Вельзевула, в дальнем угле склепа, —
И неприметным было бы, но звонкий
Ручей звенит там в полутьме подслепой,
Дыру пробивший в камне, им точимом,
С высот желанных в них лиясь нелепый.

Икĕ автор икĕ чĕлхепе хывнă поэмăсем пĕрпекрех вĕçленнин тупсăмĕ куçкĕрет. К. Иванов «Нарспи» поэмăна Дантен «Божественная комедия» произведенине вуласа тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпчесе тухса пĕтĕм тĕнчери «Дантеана» юхăмне чăвашла çырнă хайлавĕпе кĕме тĕллев лартнине пурнăçланă теме юрать. Çамрăк ăсчах тĕллевĕсем питĕ пысăк пулнă. Турри ăна нумай енлĕ ăсталăх-пултарулăх панă. Тĕплĕн шутласа ĕçлеме хăнăхнă сăмах, ӳнер ăстин тавракурăмĕ анлă, пĕлӳ шайĕ çӳллĕ пулнă.

К. Иванов поэт чăннипех те — «Ручей, дыру пробивший в камне, им точимом» тесе савăннипе пĕрлех вăл çакă тĕнчене чăваш пулса килнишĕн Турра тав тумалла. Тав тăватпăр.

Çамрăк сăвăçа Данте хăйĕн «Камитĕнче» христиан тĕнне йышăннă Рим императорне Константина икĕ çĕрте асăнни те «Нарспие» ăсталама хавхалану пама пултарнă.

Дантен гениллĕ поэмипе Раççейре 18-мĕш ĕмĕртен кăна, Пушкин саманинче, паллашма пуçланă. Гомер, Вергилий, Шекспир, Мольер, Расин тата ытти тĕнчипе паллă литераторсен хайлавĕсене пĕлнĕ пулсан, Дантене вĕсен шутне кĕртмен. Данте Çĕр çинчен кайсан кăна унăн «Камитне» итали чĕлхипе, урăх чĕлхесене куçарнине вулама пуçланă.

А.А. Илюшинăн «Поэт и его творение» статйинчен: «Божественная комедия» делится на три части: «Ад», «Чистилише», «Рай». От плохого к

хорошему. Потому и «комедия»; если бы наоборот (от хорошего к плохому) — была бы «трагедия», согласно тогдашнему пониманию этих терминов. Эпитет же «божественная» идет не от Данте, а от его восторженных поклонников. Сам поэт называл свое произведение просто: «Комедия».

Жизнь есть боль, причем боль безысходная, — гласит «Ад».

Жизнь есть боль, но не безысходная: преодолев страдание, обретем радость и блаженство, — гласит «Чистилище».

Жизнь есть радость и блаженство, — гласит «Рай»

Из трех частей «Комедии» наибольшую известность и любовь стяжал «Ад». И наименьшую — «Рай». Сам Данте предупреждал прочитавших «Ад» и «Чистилище»: не читайте «Рай»! Пропадете, сгинете в бескрайнем море непостижимого...»

«Тамăкра» асапланакансен пурнăçĕ Çĕр çинчи пурнăçĕпе çыхăннă. Вилнисем Тамăка курма аннă Дантерен тем те ыйтса пĕлеççĕ. Çĕр çинче юлнисем вĕсем пурăннă чухне мĕн тунине: ыррине е япăххине асра тытни вĕсене кăсăклантарать.

Дантен «Божественная Комедия» поэми çакăн пек вĕçленет: «Данте понял, что созерцает собственно божество — в его светозарном триединстве. Обьять его — нет сил разумения и воображения. Но есть сила, влекущая к нему волю и желание, — та самая сила, которая управляет вселенной и имя которой — любовь: «Любовь, что движет и солнце, и звезды».

Дантен поэми — тĕнче литературин кĕтречĕ. Унти пĕр йĕрки: «Мало увидеть чудо, нужно запомнить его и выразить в слове...» тени! Çамрăк поэта, тен, тăрăшуллă, ăнăçуллă ĕçлеме пултарулăх шайне ӳстерме хистенĕ.

Данте «Тамăкĕнче» çакăн пек йĕрке те пур: «Кто кончил — дело справил». 16 çулхи К. Ивановăн 1906 çулхи «Записная тетрадь» алçырăвĕнче упранса юлнă пĕр сăвви чĕрене касать. Хăйĕн кĕске ĕмĕрĕ çинчен поэт пророкла каласа хăварнăн туйăнать. Ун хыççăн вăл тепĕр 9 çул пурăннă.

А.А. Илюшинăн «Поэт и его творение» статйинчен: «Данте представляли суровым и величественным, но в его натуре есть и мятежность, и неуспокоенность. И все же ведущим началом остается в нем стремление к гармонии, в которой разрешаются самые мучительные противоречия; жажда равновесия и соразмерностей. Поэтому и гармоничен, и соразмерен мир Данте, запечатленный в «Божественной Комедии».

М.Я. Сироткинăн «Классик чувашской литературы» статйинчен: «Идейные и художественные достоинства произведений К. Иванова выдвинули его на ведущее место в чувашской литературе дореволюционного времени. ...Более того, поэзия К. Иванова получила в наше время признание читателей всех братских народов СССР и вошла в общую сокровищницу советской культуры».

Мĕн ачаран чирлĕскер сываласса шанни йăнăш пулнине чунпа туйса илсе каланă «Йăнăш пулчĕ-им ĕнтĕ?..» тенин тупсăмĕ пулма пултарать.

Халап пĕтрĕ... чарăнас.
Мăнтарăн та çынччĕ-çке,
Мăнтарăн та ыр курас
Чухне чăваш пĕтрĕ-çке!
Халап пĕтрĕ... чарăнас!

К. Ивановăн «Нарспийĕ» — чăваш литературин кĕтречĕ — тĕнче литератури çинче никĕсленнĕрен тĕнче анлăшне-çӳллĕшнех ăнталать.

30.05.05, 15.03.09, 20.10.20

Усă курнă литература:

1. Данте Алигьери. Божественная Комедия. Москва. Просвещение, 1988.

2. Джон Уайт. Эрос оскверненный. Пер. с англ. — М: Центр общечеловеческих ценностей, 1993.

3. Иванов К.В. Нарспи. Чувашское книжное издательство, 1976.

4. Иванов К.В. Килчĕ ырă çуркунне. Чăваш кĕнеке издательстви, 1980.

5. Иванов К.В. Нарспи. Чувашское книжное издательство, 1985.

6. Константин Иванов. Çырнисен пуххи. Чăваш кĕнеке издательстви, 1990.

7. Константин Иванов. Фотоальбом / А.П.Хуанкай, Г.С.Самсоноа пухса хатĕрленĕ. Чăваш кĕнеке издательстви, 1990.

8. Константин Иванова аса илеççĕ / Г.Ф.Юмарт пухса хатĕрленĕ. Чăваш кĕнеке издательстви, 1990.

9. Нарспи. ЗАО «ЦСП»Типография Брындиных», 2008.

Научно-популярное издание

Светлана Азамат
(Смирнова Светлана Васильевна)
«Нарспи» поэма вăрттăнлăхĕ
Тайна поэмы «Нарспи»

На чувашском языке

Книга издается в авторской редакции
Компьютерный набор *С.В. Азамат*
Дизайн обложки А.В. Яндайкина и С.В. Азамат
Компьютерная верстка *Р.В. Ильиной*

16+ Знак информационной продукции согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 0.0.2020 Формат $84\times108^1/_{32}$.
Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная.
Тираж 100 экз. Заказ №